24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941 ИЮЛЬ 10 КĔÇНЕРНИКУН 160 (5875) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Колхозсен чыслă ĕçĕ

Июлĕн 3-мĕшĕнче Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ радио тăрăх тухса каласа çахна асăрхаттарчĕ: «Пирĕн хамăрăн пĕтĕм ĕçе халех вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетес пулать, пурне те фронт интересĕсене тата тăшмана çĕмĕрсе тăкас задачăсене пăхăнтармалла... Пирĕн Хĕрлĕ Çара пур енчен те пулăшу парас ĕçе организацилемелле, унăн речĕсене çĕнĕ вăйсем вăйлăн парса тăмалла, ăнамĕн кирлине пурне те парса тăмалла...», терĕ.

Çак шухăшсемпе тулнă халĕ колхозниксен ĕмĕчĕсемпе кăмăлĕсем. Вĕсем Хĕрлĕ Çара тырпул, аш-какай, çăмарта, сĕт-çу тата ытти çимĕçсемпе кирлĕ хатĕрсене те ытлăн-ытлăн пама тăрăшаççĕ. Чăваш республикинчи колхозсем халĕ государство умĕнчи парăмсене срокчен парса татас, тырпула пухса кĕме хатĕрленес ĕçсене анлăн сарса пыраççĕ.

Тырпулсене пухса кĕресси — ялаяах государствăн пысăк ĕçĕсенчен пĕри пулса тăнă. Вăрçă вăхăтĕнче вăл ĕçĕн пĕлтерĕшĕ тата та ытларах ӳсет. Тырпула вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртни, тырпул тата ытти хатĕрлевсене хăвăрт тултарни, çĕршывăн продовольстви ресурсĕсене пуянлатни — тыла тата çирĕпрех, хăватлăрах тунăни, фашистла бандăсене вилĕм кӳме Хĕрлĕ Çара вăйлăн пулăшни пулать. Колхозлă уйхирсенче вăйлă тырпул çитĕнет. Кĕрхи тырăсем те, çуртрисем те хăвăрт ӳсеççĕ. Вырăнĕ-вырăнĕпе тырă выртса пулать. Çанталăк ăшă тăни тырпул пиççе çитмелли срока кĕскетет. Çакă вăл пур колхозсемпе машинăно-тракторнăй станцисене те уборкăна большевикла тимлĕхпе хатĕрленсе çитме хушать.

Кăçалхи уборка—пит те ответлă, хĕрӳ ĕç пулса тăрать. МТ Станцисен, колхозсен уборка ирттермелли мĕнпур машинăсемпе ĕçхатĕрсене пĕтĕмпех хатĕрлесе хумалла. Нумай колхозсем çавăн пек хатĕрленеççĕ те. Колхозсем уборкăна ирттерме малтан туса хунă плансене халĕ тепĕр хут пăхса тухаççĕ, ĕç вăйĕсене çĕнĕрен йĕркелеççĕ. Кармаминчи Чапаев ячĕпе тăракан колхозра (Канаш р.) тырпула пухса кĕмелли плана çак кунсенче çĕнĕрен пăхса тухрĕç. Кĕлте кӳрес, капансем тăвас çĕрте ĕçлеме хĕрарăмсемпе ватă колхозниксене çирĕплетрĕç. Уборка ĕçне çамрăксене те хутшăнтарма шутлаççĕ. Çакăн пек улшăнусем кĕртеççĕ халĕ колхозсем хăйсен планĕсене.

Сахал мар колхозсем, хăйсен ĕçĕсене çĕнĕлле йĕркелесе, вăйлă тырпула кĕтсе илме лайăх хатĕрленсе çитнĕ ĕнтĕ. «Новый путь» колхоз (Елчĕк р.) ăнăçлăн ӳсекен тырпула вырма уборка машинисене хатĕрленĕ. Ултă жнейка ремонтланă. Кӳлмелли таврашсене 33 комплект йĕркелесе хунă. Михсем 140 штука пур. Уборка вăхăтĕнче столсăй организацилеме 150 пăт çăнăх тата кĕрпесем уйăрнă. Колхозра бригадăсенче ĕçлекен агитаторсем 9 çын. «Ситмĕш» колхозра та (Вăрмар р.) мĕнпур машинăсене юсаса çитернĕ. Халĕ вĕсем урапасем юсаççĕ, итемсене витсе хатĕрлеççĕ. Киров, Папанин ячĕпе тăракан тата «Ососавиахим» колхозсем те (Ишлей р.) уборкăна хатĕрленес тĕлĕшпе начар мар ĕçлеççĕ: вĕсем ялхуçалăх машинисене ăнăçлăн юсаççĕ, витнĕ итемсене йĕркелеççĕ. Ишлей районĕнче лашапа ĕçлемелли жнейкăсене пурне те юсанă. Косилкăсене те юсаса пĕтернĕпе пĕрех. Лобогрейкăсене те, молотилкăсене те чылайĕшне юсанă. Витнĕ итемсем хатĕрленĕ. Çĕнĕ Шелттемри (Канаш р.) «Красная звезда» колхоз уйрăмăнах транспорта лайăх хатĕрлет. Кашни лаша пуçне икшер урапа тивет. Кашни бригадăрах икшер бестарка, пилĕкшар рыдван туса хунă.

Колхозниксемпе колхозницăсем — совет патриочĕсем уборкăна хĕрсех хатĕрленеççĕ, вĕсем вăйлă тырпула ăнăçлăн пухса кĕме ĕмĕтленеççĕ. Колхозниксен ĕçлес кăмăл пысăк. Пĕтĕм вăй-халпа ĕçлесе, хамăр пăхса çитĕнтернĕ тырпула уйра пĕр пĕрчĕ хăвармасăр, пĕр тăкаксăр, кĕске срокра пухса кĕртетпĕр,—теççĕ вĕсем.

Малта пыракан колхозсен паха примерĕсем тăрăх, халĕ мĕнпур колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисен çак кунсенче уборкăна хатĕрленес ĕçри хăвăртлăха темиçе хут ӳстермелле пулать. Тырпула хăвăртрах пухса кĕртес тесен, комбайнсене часрах юсаса çитермелле. Шăхасан, Новомайскри тата Хĕрлĕ Чутай машинно-тракторнăй станцисем комбайнсене юсас плана пурнăçланă та ĕнтĕ. Комбайнсене юсанипе пĕрлех, уборка вăхăтĕнче вĕсемпе туллин усă курма хатĕрленсе çитес пулать. Пур ĕçе те кадрсем татса параççĕ. Комбайнсен ăнăçлăхĕ те çынсенчен — комбайнсем çинче, трактор çинче ĕçлекен кадрсенчен килет. Ку тĕлĕшпе Шăхасан, Çĕмĕрле, Йĕпреç т. ыт. МТ Станцийĕсем пит те пархатарлă ĕç пуçласа янă. Фронта кайнă арăсынсем вырăнне ĕçлеме курсенче вĕрентсе трактористкăсем тата комбайнеркăсем хатĕрлеççĕ. Хĕрарăмсем çак ĕçе хаваслăн хутшăнаççĕ.

— Пĕтĕм Совет халăхĕ урса кайнă фашистла бандитсене çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшать. Халăх оборона вăй-хăватне тĕрлеклетет. Эпир, трактор ĕçне вĕреннĕ хĕрарăмсем, халиччен тĕрлĕ çăлтавсемпе çав ĕçре ĕçлеймен пулсан, халĕ каллех трактор çине ларатпăр. Ĕçре стахановла тĕслĕхсем кăтартăпăр, МТС планне ăнăçлăн пурнăçласа пырăпăр. Çав вăхăтрах ытти хĕрарăмсене те трактора ĕçлеме вĕрентĕпĕр, — тет Шăхасан районĕнчи трактористка Никифорова юлташ. Çак сăмахсем вĕсем совет патриотĕсен шухăш-кăмăлĕсене кăтартса параççĕ. Тракторсем, комбайнсем пĕр чарăнмасăр ĕçлĕç.

Фашистла Германия, мирлĕ договора пăсса, пирĕн çĕршыв çине вăрçăна тухнине пĕлсенех, комбайнерка Варвара Васильева (Шăхасан р.) хăйĕн комбайнне татах тепĕр хут тĕрĕслесе тухрĕ:

— Манăн комбайн тахçантанпах уборкăна хатĕр, — тет вăл, — анчах эпĕ ăна тĕрĕслесех тăратăп. Хăшпĕр вырăнсем тутăхман-и, е гайкăсем пушанман-и, вĕт çавсем те, пĕчĕк кăлтăксем çеç пулсан та, ĕçре пысăк чăрмавсем кӳме пултараççĕ. Иртнĕ çулта манăн комбайн лайăх ĕçлерĕ. Норма тăрăх 260 гектар вырмалла пулсан, 327 гектар выртăм. Кăçал эпĕ татах та лайăхрах ĕçлĕп, сахалтан та 400 гектар вырса илме пулатăп, — тет вăл.

Комбайнсемпе пĕрлех ытти ялхуçалăх машинисене те халех юсаса çитермелле. Утă çулмалли машинăсене тырă вырма юрăхлă туса хумалла. Машинăсемсĕр пуçне кăçал кĕреплеллĕ çавасене те, çурласене те хатĕрлесе хумалла пулать. Жаткăсемпе ĕçлеме çынсем, икшер сменăпа ĕçлеме лашасем палăртса тухмалла. Кашни жнейка хыççăн кĕлте çыхса пыма ӳйрăм колхозниксене уйăрмалла. Кăçал хăшпĕр колхозсенче кĕлте çыххисене (уйрăмăнах çуртри вырнă чухне) уя тухиччен малтанах хатĕрлесе хума шутлаççĕ. Кĕлте çыхаканĕ çыхă туса вăхăта ахаль ан ирттертĕр. Тырă выртса пулни пĕр колхозшăн та ăнсăртран килсе тухнă «инкек» пулса ан тăтăр. Çавăнпа та, комбайнсене çавăн пек тырра вырма пултаракан туса йĕркеленисĕр пуçне, тырра вырма çурласене лайăх шăллаттарса, çавасене тупталтарса хурас пулать.

Уборкăна тухас умĕнхи вăхăтпа тулли усă курас пулать. Тырă вырма тухиччен машни машинăна, урапана, машни бестаркăна, рыдвана юсаса хатĕрлесе çитермелле, кантрасемпе вĕренсем, кĕреçесем, шăпăрсем, кĕреплесем, зерноуловительсем, çава туптамалли лапаткасем, михĕсем, шăналăксем ытлашшипех хатĕрлесе хумалла.

1941 çулхи тырпула пухса кĕрессине ăнăçлăн йĕркелес тени вăл—чи малтан ĕçе тĕрĕс организацилессине, ĕç тухăçлăхне вĕçĕмсĕр ӳстерессине пĕлтерет. Колхозлă уйхирте хĕрӳ ĕç пынă вăхăтра колхозниксене пĕрле апатланма столовăйсем туса пани, ачаллă арăмсене ĕçе хутшăнтарма ачаяслисем, площадкăсем организацилени, массăллă-политикăллă ĕçе йĕркелени ĕç тухăçлăхне ӳстерес çĕрте мĕнле палăк вырăн йышăнса тăнине колхозсен иртнĕ çулсенчи пуян опычĕсем пит те аван кăтартса параççĕ. Çавăнпа та ку тĕлĕшпе пирĕн колхозсен кăçал уйрăмăнах тимлĕн ĕçлемелле пулать.

Тырпула вăхăтра тата тăкаксăр пухса кĕме колхозниксен мĕн кирли пурте пур. Ĕç вăйĕпе, механизмсемпе, пур резервсемпе те туллин усă курни, ĕç дисциплинине çирĕплетсе пыни кăна кирлĕ. Колхозсенче халĕ, çитĕннĕ çынсемпе пĕрлех, производство ĕçне çамрăк ачасем те активлăн хутшăнма пултараççĕ. Аслă шкулсенче, вăтам шкулсенче вĕренекенсемпе пĕрлех, чылай преподавательсем çуллахи каникул вăхăтĕнче колхозра ĕçлеме кăмăл тăваççĕ. Ку тĕлĕшпе Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн преподавателĕсемпе профессорĕсен коллективĕ пит те паха пример пачĕ, вĕсем колхозсене уборкăна ăнăçлăн ирттерес ĕçре пулăшма вырăнсене тухса каяççĕ.

Уборкăна ăнăçлăн ирттерме хатĕрленнĕ май, çакна яланах асра тытни кирлĕ: колхоз пурлăхне, унăн тырпулне хытă сыхламалла. Социализмлă харпăрлăха сыхласси яланах совет патриочĕсен пархатарлă ĕçĕ пулса тăнă. Вăл ĕç — хальхи вăхăтра, вăрçăн хăрушă кунĕсенче, пит те пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Тăшман кирек хăш участокра та сиен кӳме тăрăшать. Ăна хирĕç пирĕн хамăрăн сыхлăха ӳстернипе, хуçалăхри йĕркене, учета лайăхлатнипе ответлемелле. Уйрăмăнах тырпула тустарса пĕтерессинчен, пушартан хытă сыхламалла пулать.

Уборкăна хăвăртрах хатĕрленсе çитер, кашласа пулакан турпула ăнăçлăн пухса кĕрер!

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарти Сывлăш-Çар вăйĕсен летчикĕсене, техникĕсене, сывлăшри стрелокĕсене тата рядовой составне СССР орденĕсемпе наградăласси çинчен

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа хастарлăх кăтартнăшăн çак юлташсене наградăлас:

ЛЕНИН орденĕпе:

1. **Власенко** Иван Власович — стрелок-командир, сержант.
2. **Говоров** Петр Тарасович — стрелок-радист, кĕçĕн сержант.
3. **Данилов** Андрей Степанович — летчик, старший политрук.
4. **Дерюгин** Сергей Сергеевич — звено командирĕ, кĕçĕн лейтенант.
5. **Дроздов** Иван Николаевич — эскадрилья командирĕ, капитан.
6. **Киселев** Петр Петрович — летчик, кĕçĕн лейтенант.
7. **Манторов** Семен Иванович — эскадрилья командирĕ, капитан.
8. **Смирнов** Василий Семенович — стрелок-радист, старший сержант.
9. **Терехин** Николай Васильевич — эскадрилья командирĕ, старший лейтенант.

ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе:

1. **Артемов** Александр Алексеевич — эскадрилья командирĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ, летчик, старший политрук.
2. **Агеев** Иван Георгиевич — эскадрилья командирĕ, капитан.
3. **Бундюк** Иван Степанович —летчик, старший лейтенант.
4. **Баловленков** Василий Васильевич — штурман, капитан.
5. **Быстров** Аркадий Федорович — эскадрилья командирĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ, — летчик, старший политрук.
6. **Бузылев** Сергей Фавстович — полк командирĕ, майор.
7. **Белюченко** Иван Игнатьевич — стрелок-радист, кĕçĕн сержант.
8. **Баракин** Разум Иванович — эскадрилья командирĕн заместителĕ, лейтенант.
9. **Волков** Анатолий Георгиевич — стрелок-радист, кĕçĕн сержант.
10. **Валовенко** Иван Анисимович — звено командирĕ, лейтенант.
11. **Вернигор** Петр Николаевич — летчик, лейтенант.
12. **Васильковский** Федор Григорьевич — стрелок-радист, кĕçĕн сержант.
13. **Горбатюк** Евгений Михайлович — летчик, лейтенант.
14. **Головачев** Николай Евгеньевич — штурман, старший лейтенант.
15. **Газазян** Водрик Оганесович — эскадрилья командирĕн заместителĕ, старший лейтенант.
16. **Грошин** Николай Иванович — звено командирĕ, кĕçĕн лейтенант.
17. **Жуковский** Сергей Яковлевич — эскадрилья командирĕ, лейтенант.
18. **Зеленин** Алексей Андреевич — стрелок-радист, сержант.
19. **Илларионов** Дмитрий Илларионович — летчик, старший лейтенант.
20. **Красота** Роман Константинович — стрелок-радист, кĕçĕн сержант.
21. **Лебедев** Степан Иванович — летчик, кĕçĕн лейтенант.
22. **Монастырский** Григорий Федорович — летчик, лейтенант.
23. **Мельников** Михаил Александрович — эскадрилья командирĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ, летчик, старший политрук.
24. **Межов** Николай Васильевич — эскадрилья командирĕ, капитан.
25. **Низамов** Иман Низамович — стрелок-радист, сержант.
26. **Ониченко** Михаил Васильевич — эскадрилья командирĕн помощникĕ, капитан.
27. **Паршиков** Иван Семенович — летчик, старший лейтенант.
28. **Пойденко** Василий Федорович — звено командирĕ, лейтенант.
29. **Прокофьев** Александр Терентьевич — летчик, лейтенант.
30. **Руденко** Анатолий Владимирович — эскадрилья командирĕн заместителĕ, лейтенант.
31. **Сорнев** Алексей Дмитриевич — кĕçĕн летчик, кĕçĕн лейтенант.
32. **Святош** Александр Иванович — летчик, кĕçĕн лейтенант.
33. **Соркин** Наум Михайлович — звено командирĕ, лейтенант.
34. **Сыч** Григорий Федорович — летчик, кĕçĕн лейтенант.
35. **Тимохин** Николай Борисович — звено командирĕ, лейтенант.
36. **Терехов** Семен Федорович — стрелок-радист, сержант.
37. **Усиевич** Алексей Иванович — звено командирĕ, лейтенант.
38. **Феоктистов** Александр Иванович — штурман, кĕçĕн лейтенант.
39. **Финогенов** Григорий Захарович — летчик, кĕçĕн лейтенант.
40. **Фомин** Дмитрий Михайлович — стрелок-радист, сержант.
41. **Хроменков** Иван Ефимович — звено командирĕ, лейтенант.
42. **Чопов** Владимир Григорьевич — звено командирĕ, лейтенант.
43. **Яровой** Павел Григорьевич — стрелок-радист, сержант.

ХĔРЛЕ ÇАЛТАР орденĕпе:

1. **Бардин** Петр Иванович—эскадрилья командирĕн помощникĕ, лейтенант.
2. **Беловол** Дмитрий Андреевич — стрелок-радист, кĕçĕн сержант.
3. **Бурд** Владимир Онуфриевич — стрелок-радист, сержант.
4. **Бычков** Василий Федорович — эскадрилья командирĕн заместителĕ, кĕçĕн лейтенант.
5. **Вернигор** Алексей Иванович — звено командирĕ, лейтенант.
6. **Волков** Борис Алексеевич — звено командирĕ, лейтенант.
7. **Гордиенко** Николай Сергеевич — моторист, красноармеец.
8. **Гениатулов** Ахмед — стрелок-радист, красноармеец.
9. **Грибов** Григорий Логинович—инженер, виççĕмĕш рангри военинженер.
10. **Егунов** Григорий Иванович — летчик, лейтенант.
11. **Иватулин** Хасан Мингилеевич — эскадрилья командирĕн заместителĕ, лейтенант.
12. **Иванов** Алексей Алексеевич — звено командирĕ, лейтенант.
13. **Коршунов** Петр Андреевич — летчик, лейтенант.
14. **Карузин** Михаил Михайлович — летчик, лейтенант.
15. **Моисеенко** Иван Абрамович — стрелок-радист, кĕçĕн сержант.
16. **Марунченко** Георгий Васильевич — звено командирĕ, лейтенант.
17. **Новиков** Степан Феофанович — эскадрилья командирĕ, капитан.
18. **Назаренко** Александр Сергеевич — летчик, лейтенант.
19. **Новиков** Алексей Герасимович — звено командирĕ, лейтенант.
20. **Некрылов** Алексей Яковлевич — эскадрилья командирĕн помощникĕ, старший лейтенант.
21. **Осин** Иван Александрович — стрелок-радист, сержант.
22. **Подкрятов** Александр Петрович — звено командирĕ, лейтенант.
23. **Пикунов** Иван Николаевич — пилот, кĕçĕн лейтенант.
24. **Попович** Иван Яковлевич—эскадрилья командирĕ, старший лейтенант.
25. **Рыжов** Владимир Иванович — эскадрилья командирĕн заместителĕ, кĕçĕн лейтенант.
26. **Сударев** Павел Емельянович — летчик, лейтенант.
27. **Соколов** Николай Никитович — эскадрилья командирĕ, капитан.
28. **Сенчугов** Олег Иванович — звено командирĕ, лейтенант.
29. **Уцин** Александр Николаевич — звено командирĕ, кĕçĕн лейтенант.
30. **Шустров** Илья Ильич — звено командирĕ, кĕçĕн лейтенант.
31. **Якименко** Игорь Иосифович — эскадрилья командирĕн заместителĕ, лейтенант.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти июлĕн 8-мĕш.

Сталин юлташ Англи посолне г. Криппса йышăннă

Июлĕн 8-мĕшĕнче СССР Совнаркомĕн Председателĕ Сталин юлташ Англи посолне г. Криппса йышăннă. Калаçу пĕр сехет ытла пынă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарти Сывлăш-Çар вăйĕсен летчикĕсене Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюллăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, **Ленин** орденĕпе **Ылттăн Çăлтăр** медалĕ парса, Совет Союз Геройĕн званине çаксене парас:

1. Звено командирĕ, летчик, кĕçĕн лейтенант Степан Иванович **Здоровцев;**
2. Летчик, кĕçĕн лейтенант Михаил Петрович **Жуков;**
3. Летчик, кĕçĕн лейтенант Петр Тимофеевич **Харитонов.**

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти июлĕн 8-мĕш.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Июлĕн 8-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ)

Июлĕн 8-мĕшĕнче Остров, Полоцк, Новоград-Волынск тата Бельцы енĕсенче вăйлă çапăçусем пынă. Артиллери, танксем тата авиаци пулăшнипе, пирĕн чăсем противника темиçе хутчен те вăйлăн пыра-пыра çапнă, ăна малалла кайма чарса тăнă.

Остров енче иртен пуçласах хаяр çапăçусем сарăлса кайнă, çав çапăçусенче пирĕн войскăсем темиçе хутчен те контратакăсем тунă. Пирĕн артиллерирен персе тăнипе, авиаци бомбăсем пăрахнипе тата танковăй чăсем контрударсем тунипе противника пысăк çухатусем кӳнĕ.

Полоцк енче Борковичи районĕнче Западная Двина юханшывĕн çурçĕр хĕрринче çирĕпленсе тăма хăтланакан тăшман войскисене хирĕç вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Новоград-Волынски енче пирĕн войскăсем противникăн танковăй пысăк чăсĕсен наступленине çине тăрса сире-сире ярраççĕ.

Бельцы районĕнче пирĕн войскăсем противникăн пехотине танкĕсене хирĕç вăйлăн çапăçаççĕ.

Фельчиу районĕнче пирĕн войскăсем румынсемпе нимĕçсен наступлени тăвакан войскисене темиçе хутчен те хăвăтлăн пырса çапнă.

Контрударсем туса противника каялла хăваласа янă, вăл йĕркерен тухса Прут юханшывĕн лешъенне кайнă, вооруженипе снаряженисем пăрахса хăварнă.

Мурманск, Кандалакша тата Ухта енĕсенче пирĕн войскăсем противникăн уйрăм групписене хирĕç çапăçнă, вĕсем пирĕн территори çине савăлланса кĕнĕ пулнă.

Çав кун хушшинче пирĕн авиаци противник авиацин аэродромĕсем çине ăнăçлăн атакăланă тата унăн танковăй тата моторизованнăй войскисене темиçе хутчен те поражени кӳнĕ. Пĕр кун хушшинче нимĕçсен 56 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн авиаци 4 самолет çухатнă.

* * *

Çурçĕрти флотăн карапĕсем, авиаци хӳтлесе пынипе, Хĕрлĕ Çар чăсĕсене пулăшма десант ăнăçлăн антарнă.

Ханко районĕнче, минометран тата артиллерирен персе, противникăн пирĕн чăссене атакăлама хăтланнă икĕ ротине пĕтерсе тăкнă.

Дунай çинчи çар флотилийĕн авиацийĕ противникăн юханшыв çинчи транспорчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем тĕл ӳкнине тата виçĕ транспорт çинче пушарсем тухнине палăртнă.

* * *

Пирĕн летчиксем хăюллăхпа паттăрлăхăн образĕсене кăтартаççĕ. Подполковник Нимцович, тăшманăн «Мессершмитт» тата «Хейнкель» йышши 60 самолечĕ хăш вăхăтра тата ăçта анса ларнине сăнанă хыççăн, июлĕн 7-мĕшĕнче хамăрăн çичĕ истребителе сывлăша хăпартнă. Виçĕ хутчен пырса тапăнса, тăшманăн 30 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн самолетсем çиччĕшĕ те хăйсен аэродромне тавăрăннă.

* * *

Анжаревскипе Шалар лейтенантсен ДОТ-чĕ çине темиçе сехет хушши авиаци бомбăсем вăйлăн пăрахнă тата артиллерирен пенĕ. Фашистсем, ДОТ-а çĕмĕрсе тăкнă тесе шутласа, ун патнелле пынă. Нимĕç пехотине сывăхрах ярса, ДОТ гарнизонĕ çĕнĕрен калама çук вăйлăн пеме пуçланă. Çапăçу пулнă çĕрте тăшманăн çĕршер салтакĕсем вилнĕ тата аманнă. Фашистсен салтакĕсем çеç мар, тата мотоциклсем те, пулеметсемпе тупăсем те сывлăшалла сирпĕне-сирпĕне кайнă.

* * *

Красноармеецсен взводне кĕтмен çĕртен белофинсем атакăланă пулнă. Тăшман снайперĕсем танка хирĕç кĕрешмелли орудин наводчикне стройран кăларнă. Питех те кирлĕ самантра оруди ĕçлеймен. Çакăнпа усă курса, белофинсем вăйлăн хĕсме пуçланă. Кирек мĕнле пулсан та вĕсене хирĕç пемелле пулнă. Кĕçĕн сержант Егоров тăшман персе тăнă вăхăтрах, оруди патне шуса пынă. Противник çак хăюллă сержанта пĕтĕм вăйран чăрмантарма хăтланнă, ун çине пулеметсенчен пенĕ. Анчах та хăюллă командир оруди патне çитсе ăна 10 метр малалла куçарса, атакăлакан белофинсем çине пеме пуçланă. Противник енчен пеме чарăннă. Взвод контратака туса хăйĕн малтанхи вырăнĕсене йышăннă.

* * *

Смирновпа Рассохин красноармеецсем хастарлăхпа тавçăрулăх кăтартнă. Çул пăрăннă çĕрте кĕтмен çĕртен немĕç мотоциклисчĕсен ушкăнне асăрханă хыççăн, красноармеецсем противник курмалла мар çĕре пытанса фашистсен малта пыракан çыннисем çине ручной пулеметран пеме пуçланă. Малта пыракан икĕ мотоциклист çĕре персе аннă. Ытти сем вĕсем çине пыса тăраннă. Тăшман отрячĕ пăтрашса кайнă. Салтаксем, мотоциклсене пăрахса, ним йĕркесĕр каялла тарнă.

* * *

Фронт çывăхĕнчи Ф. чугунçул станци çинелле тăшман самолечĕ пынă. Фашистсен летчикĕ аялтан вĕçсе станцири об'ектсене разведка тума хăтланнă. Анчах та вăл çакна тăвайман. Станцири стрелковăй охрана боецĕсем, винтовкăсенчен çине-çине персе, тăшман самолетне персе ӳкернĕ. Самолет экипажне тытăна илнĕ.

* * *

Совет патриочĕсем тăшман тылĕнче паттăрăн кĕрешни çинчен кашни кунах çĕнĕ хыпарсем килеççĕ. Хĕвеланăç Белоруссири Н-ски районра партизансен 100 çынлă отрячĕ немĕçсен мотопехоти çине тапăннă. Фашистсемпе çапăçнă чухне партизансем немĕçсен 150 салтакне вĕлернĕ. Тепĕр районра партизансен отрячĕ, йывăç тĕмисем хушшине пытанса, фашистсен танк колонни çине тапăнса, ун çине бутылкăсемпе пенĕ, бутылкăсем ăшĕнче бензин çуннă. Фашистсен пысăк танкĕсене пурĕ 18 танк пĕтерсе тăкнă.

* * *

Индире Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулнинне кăтартакан движени кунран кунах сарăлса пырать. Бомбейри хаçатсенче профсоюзсен пĕтĕм Индири Национальнăй Конгресс деятелĕсен заявленине пичетлесе кăларнă, вăл заявленире рабочисене, хресченсене, студентсене тата Индири мĕнпур прогрессивлă вăйсене Совет Союзне пур енчен те пулăшма чĕнсе каланă.

* * *

Гитлер чуралăха кĕртсе ӳкернĕ Югославире Германи фашизмне хирĕç массăллă выступленисем тăваççĕ. Кашни ирхинех Белградри çуртсем çумĕнче çакăн пек лозунгсене курма пулать: «Сывă пултăр Совет Союзĕ!», «Тĕп пултăр Гитлер!» Югослави çарĕнчи салтаксем, сăрт-ту çинче пытанса, кĕтмен çĕртен тапăнса, гитлерла оккупантсене пĕрмаях хăратса тăраççĕ.

* * *

Сталин юлташ чĕнсе каланине халăх предприятисенче тата уйхирсенче геройла ĕçсем тунипе, хастарлăн ĕçленипе ответлет. Сталинградри тракторсем тăвакан заводри чугун шăратакан цехри рабочисем июлĕн 6-мĕшĕнче плана 148 процент тултарнă. Урюпинскри Ленин ячĕпе тăракан заводри стахановецсем Самохвалов тата Кошкарев сменăра виçĕ норма панă. Камызикски районри «Путь Ленина» колхоз аш-какай, çу тата çăмарта тăратмалли плана срокчен малтан тултарнă. Сталинградри Баррикаднăй районра станци таврашĕнчи çулсене тасатма 250 хĕрарăма чĕнсе илнĕ. Палăртнă срок тĕлне станцине килхуçи хĕрарăмсем пин çын ытла пынă. Запорожье облаçĕнчи Больше-Токмакскри заводри стахановец Яковенко приспособлени шухăпласа кăларнă, çав приспособлени ĕç тухăçне çĕр хут ӳстерме май панă. Çак приспособлени пулăшнипе Яковенко сменăри нормăна 10 пин процент тултарнă. Сызраньри паровоз деповĕнчи машинистсем Зайцев, Акимов тата Бирбасов юлташсем слесарь специальноçне вĕреннĕ тата паровоза хăйсемех юсаççĕ. Орджоникидзе ячĕпе тăракан металлурги заводĕнчи çамрăк производственниксем, 500 çын, нормăна тăтăмах ирттерсе тултараççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕсем кунне икшер тата виçшер норма параççĕ. Лутугин ячĕпе тăракан шахтăри электровозсен хĕрарăм-

Малалли 4-мĕш страницăра

СТАЛИН ЮЛТАШ ЧĔНСЕ КАЛАНИ ÇИНЕ СОВЕТ ХАЛĂХĔ ПĔР ШУХĂШЛĂ ПУЛСА ОТВЕТЛЕТ.

Пурне те фронт интересĕсене пăхăнтарăпăр. Тăшмана çапса çĕмĕретпĕрех!

Сталин юлташ радио тăрăх сăмах тухса каланă ятпа Шупашкар горисполком фабрикинче пулнă митинг. Сăмах тухса калаканни—фабрика директорĕ И. В. Делицин юлташ.

А. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

Колхозсенчи митингсем

КАНАШ. Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланине районри колхозсенче пĕрле пухăнса итленĕ. Каçхине ĕçрен таврăнсан Киров, Каганович ячĕпе тăракан, «Косомолец» тата ытти колхозсенче те митингсем пулса иртрĕç.

Вăрман хатĕрлевĕнчен, çум çумланă çĕртен тата ытти ĕçсенчен тавăрăннă колхозниксем «Комсомолец» колхозăн клубĕ умне кĕске вăхăт хушшинчех 82 колхозник ытла пухăнса ситрĕ. Вĕсем хушшинче 50 çултан иртнĕ колхозниксем те, комсомолецсем те, шкул ачисемпе пионерсем те нумай.

Ялсовет председателĕ Петр Филиппович Филиппов Сталин юлташ радио тăрăх тухса калани çинчен тата çав ятпа митинг уçăлни çинчен пĕлтерет.

Тухса калаканскем пурте Германин урса кайнă фашисчĕсем Совет çĕршывĕ çине вăрă-хурахла тапăннине хирĕç ответлесе колхозри ĕç тухăçлăхне пысăкăн ӳстересси çинчен каларĕç.

Колхозра халĕ производствăллă çĕкленӳ пырать. Вăрман хатĕрлевĕнче 35 çын, çумçумланă çĕрте 40 çын, плотина тунă çĕрте 11 çын ĕçлеççĕ. Уя тислĕк тăкаççĕ. Колхозниксем государство умĕнчи парăмсене кĕске вăхăтрах парса татма пулчĕç. Кузьмин Василий пĕр кун хушшинче заем укçине 200 тенкĕ ытла пухрĕ. Колхоз та, колхозниксем те государствăна çăм парса татнă.

Колхоз тимĕрçи В. Антонов хăйĕн ĕç нормине куллен 270 процент тултарса пырать. Д. Дмитриев, С. Сергеев колхозниксем ватă пулсан та колхозра çамрăксем пекех хĕрӳллĕн ĕçлесе пыраççĕ. Фронта каякансен вырăнне ĕçлеме хĕрарăмсем тăраççĕ.

П. НИКОЛАЕВ.

Колхозсенче хастарлă ĕç пырать

СĔНТĔР. Колхозсенче халĕ хĕрӳ ĕç пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем, ĕç фронтĕнчи боецсем пулса тăрса, вăйлă тырпулăн кĕрешеççĕ. Хĕрлĕ Çар, Хĕрлĕ Флот, Авиаци валли, пĕтĕм тăван çĕршыв валли ялхуçалăх çимĕçĕсем ытлăн-ытлăн пулччĕр — сакăн пек халĕ колхозниксен массин таса шухăш-кăмăлĕ. Çак шухăш вĕсен ĕç хастарлăхне çĕклет, çине тăрса, пĕтĕм пултарулăха, вăй-хала парса ĕçлес кăмăла хавхалантарать.

Пирĕн районра нумай колхозсем çĕртме туса пĕтерчĕç. Сухаласа пĕтерейменнисем вăл ĕçе çак кунсенчех вĕçлеççĕ. Çĕртме сухине, шĕтмĕшпе илсен, тракторсен вăйĕпе туса пынă. Паянхи кун тĕлне районра пĕтĕмпе 4.855 гектар çĕртме сухи тунă. Вăл шутран машинно-тракторнăй станци 4.445 гектар таран сухаланă.

Кăçал колхозсем çĕртме уйĕ çине тислĕк нумай кăларчĕç. Планпа палăртнă тăрăх, районĕпе колхоз хирĕсене 234 пин лав тислĕк кăлармалла пулнă, паянхи куна 259.800 лав кăларнă. Колхозсем пĕр юлашки вунă кун хушшинче кăна уя 21 пин лав тислĕк кăларнă. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах «Авангард», «Свобода», «Новая жизнь» «Сĕнĕ Юнга» тата Муркаушри Сталин ячĕпе тăракан колхозсем аван ĕçлеççĕ.

Ул тислĕк кăларнă вăхăтрах, тырă пуссисенче çум çумлас ĕç те сарăлса пырать. Паянхи куна 433 гектар çинче çум çумланă. Вăл шутран ыраш пуссисенче 265 гектар çинче çумланă. Çум курăксемпе кĕрешес ĕçе «Свобода» колхозра аван йĕркеленĕ. Вĕсем çуртри пуссинче 11 гектар çинче çум çумланă. «Авангард» колхозра вăрлăх участокĕнче çумкурăксене пĕтĕмпех тасатнă.

И. КУЖАКОВ.

Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Учительсем колхозниксем хушшинче ĕçлеççĕ

ЭЛĔК. Элĕкри вăтам шкулта ĕçленĕкен учительсем отпукспа усă курмаççĕ, колхозниксем хушшинче массăллăнлантаруллă ĕçсем туса пыраççĕ. Кашни учителех колхоз çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем колхозсенче кашни кун пулаççĕ, колхозниксене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсемпе паллаштараççĕ, вăрçă çинчен лекцисем, калаçусем ирттереççĕ, хаçатсем çинчен çĕнĕ хыпарсем вуласа параççĕ, радио тăрăх паракан юлашки хыпарсене пĕрле пухăнса итлеççĕ.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин июлĕн 3-мĕшĕнче радио тăрăх тухса каланă сăмаха пур колхозсенче те итлерĕç. Учительсем Сталин юлташ сăмахне колхозниксене чăвашла ăнлантарса паçĕç. Пулса иртнĕ митингсенче колхозниксем хамăрăн тăвап çĕршывăшăн, прĕклĕхшĕн, чыслăхшăн—тăшмана хирĕç юлашки юн тумламĕ юлмиччен çапăçма хатĕр тăни çинчен пĕлтерчĕç.

Синерти Жданов ячĕпе тăракан колхоз тата «Коммунар» промартель çумне çирĕплетнĕ учительница Пелагея Петрикова юлташ уйрăмах лайăх ĕçлет. Нумай учительсем çĕнĕ заем укçине тулесе татрĕç. Вĕсем колхозниксемпе колхозницăсене сывлăшран килсе тапăннинчен вырăнта сыхланма вĕрентеççĕ.

Элĕкри вăтам шкулти учительсем районри мĕнпур учительсем патне çыру ячĕç, çав çырура вĕсем пурне те колхозниксем хушшинче хăйсем пек тăрăшса ĕçлеме чĕнеççĕ, уборкăра колхозсене пулăшма пуласçĕç.

С. САПЕРКИН.

Колхозсем утă çулаççĕ, государствăна утă параççĕ

КАЛИНИНО. Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă ятпа районри учрежденисемпе колхозсенче нумай çынлă митингсем пулса иртеççĕ. Рабочисемпе служащисем тата колхозниксем халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ чĕнсе каланине социализмлă тăван çĕршывăшăн мĕнпур вăя хурса, хăйсен пурнăçне шеллемесĕр ĕçленипе, организацилĕхе тата революциллĕ сыхлăха вăйлатнипе, дисциплинăна çирĕплетнипе ответлеççĕ.

Июлĕн 2-мĕшĕнче районри колхозсем утă çулма тухрĕç. Утă çулас ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Колхозниксемпе колхозницăсем утăна хăвартрах пуçтарса кĕме, государствăна паха утă пама тăрăшаççĕ. «Коминтерн» колхозна Юнтапа ялсоветне кĕрекен колхозсем июлĕн 5-мĕшĕнче государствăна утă тăратма тытăнчĕç. Районри колхозсем июлĕн 15-мĕш тĕлне государствăна утă парса татассишĕн кĕрешеççĕ.

Нумай колхозсем государствăна тĕштирĕ парааççĕ. Çавалкасри «Сутталла», Мичурин, Чапаев ячĕпе тăракан тата Услапари «Броневик» колхозсем 1941 çулшăн государствăна тĕштирĕ тăратмалли обязательствăсене 50-шар процент тултарнă.

Колхозсенче заемшăн укçа пухасси те ăнăçлă пырать. Нумай колхозниксем заем укçине срокчен парса татаççĕ.

К. НИКИТИН.

ВКП(б) Калинински райкомĕн секретарĕ.

Ватă колхозниксемпе хĕрарăмсем— ответлă ĕççенче

ИШЛЕЙ. Турханти «Сĕнĕ хунав» колхозра фронта тухса кайнă çамрăксем вырăнĕнче ватă колхозниксем ĕçлеме тытăнчĕç. Пĕрремĕш бригадăн бригадирĕ пулса Н. Дмитриев юлташ ĕçленĕ. Вăл халь Хĕрлĕ Çарта. Унăн бригади яланах малта пынă.

Пĕрремĕш бригадăра халь бригадир пулса 56 çулхи колхозник Осипов юлташ ĕçлет. Осипов юлташ халиччен звеновод пулса ĕçленĕ. Вăл çапла калать:

— Пĕрремĕш бригада малалле те малта пырĕ. Эпир, колхозниксем, вăйлă тырпула ăнăçлăн пухса кĕртес тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕпĕр.

Манăн икĕ ывăл та Хĕрлĕ Çар ретĕнче,—пĕри—старший сержант, тепри, кĕçĕн лейтенант, вĕсем иккĕшĕ те фашистла йытăсене хирĕç çапăçаççĕ. Пирĕн ĕç фронтĕнче кашни кун çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнӳсем туса, Хĕрлĕ Çара пулăшса пымалла.

Çавăн пекех «Восток», «Звезда», Киров ячĕпе тăракан колхозсенче те бригадирсем пулса тата ытти çавнашкал ответлă ĕçсене ватă колхозниксемпе хĕрарăмсем юлаççĕ.

Ф. ТУРХАНКАЙ.

Тырпул тухăçлăхĕшĕн, выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕшĕн

КУКЕÇ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1941 çулти мартăн 19-мĕшĕнче «Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстернĕшĕн Чăваш АССР Республикинчи колхозниксене ĕçшĕн хупса тӳлесси çинчен» калăрнă историллĕ постановлени колхозниксен ĕçри хастарлăхне ӳстерес пырать. Колхозниксем, урса кайнă тăшмана — фашистсене çапса çĕмĕрес çĕрте пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çара, Хĕрлĕ Флота тата Авиацине пур майсемпе те пулăшас ĕмĕтпе ĕçлекенскерсем, вăйлă тырпулăн, тухăçлă пахча-çимĕçĕшĕн, выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕшĕн кĕрешеççĕ.

«Осоавиахим» колхозра иккĕмĕш бригадăн (бригадирĕ Хабаров юлташ), план тăрăх, кăçал гектартан вăтам шутпа 14 центнертан кая мар тĕштирĕ туса илмелле. Бригадăри колхозниксем кашни гектартан 17 центнер илме шутлаççĕ. Унчухлĕ пухса кĕресси халех паллă: колхозăн тырпул пит лайăх çитĕнет. Çуртрисем те пĕр карăн ӳсеççĕ, вĕсене çумкурăксенчен тасатнă. Тырпул вăйлă çитĕнни колхозниксен ĕçлес кăмăлне вĕçĕмсĕр хавхалантарать.

Колхоз агротехникăллă ĕçсене тивĕçлĕн пурнăçлать. Тырпула пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе пысăк çитĕнӳсем тунăшăн бригадир Хабаров юлташ кăçал ялхуçалăхĕнче малта тăракан çамрăксен республикăри слетĕнче пулма тивĕçлĕ пулчĕ.

Выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхне ӳстерес çĕрте Молотов ячĕпе тăракан колхоз уйрăмăнах аван тĕслĕхсем кăтартать. Кунта дояркăсем, ферма работникĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Кашни ĕнерен мĕн чухлĕ сĕт суса илессишĕн кĕрешмеллине дояркăсем аван пĕлеççĕ. А. Якимова доярка «Нежная» ятлă ĕнене пăхать. Вăл хăй пăхакан ĕнерен кашни талăкрах 15—16 литр сăвать. Кун пек тĕслĕхсем ку колхозра татах та пур.

Колхоз иртнĕ çулта кашни фуражнăй ĕнерен вăтам шутпа 1443 литр сĕт суса илнĕ. Кăçал колхозри зоотехник Е. М. Центров кашни фуражнăй ĕнерен 2000 литр сĕт суса илессишĕн тăрăшать.

Колхозра кăçал кĕресене вăхăтра чуптарса хăварнă. Конюх В. Кирилов хăйне çирĕплетсе панă тихасене пурне те лайăх, мăнтăр çитĕнтерет. Конюхра вăл пиллĕкмĕш çул ĕçлет, лашасене лайăх пăхать. Çавăнтăн ăна 1940 çулта Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине экскурсине янă.

Симентальски йăх пăрусене 6 уйăха çитиччен талăкра 550 граммăр, красногорбатовски пăрусене 500 граммăр çитĕнтермелле. Молотов ячĕпе тăракан колхозра çамрăк пăрусен чĕрĕ вăйĕ талăкра 622 граммăр хутшăнса пырать. «Кральян» пăру талăкне вăтам шутпа 772 граммăр, «Вескан» — 852 граммăр хутшăнаççĕ.

Заводской ялĕнчи «Красный Флот» колхозра та кун пек тĕслĕхсем нумай. Доярка Терентьева хăшпĕр ĕнесенчен талăкра 14-15 литршар сĕт суса илет. План тăрăх 12-13 литршар сумалла. Хăшпĕр пăрусем талăкра 890 грамм хутшăнса пырааççĕ. Çамарта тăвакан кашни чăхран вĕсем паянхи куна 70-шер çамарта пухса илнĕ.

Фермăсенче выльăх-чĕрлĕх продукцине куллен-кун ӳстересси—зооветеринари правилисене пăхăнса, ăна пурнăçа кĕртсе пыннинчен килет. Молотов ячĕпе тăракан тата «Красный Флот» колхозсенче вăл йĕркесене пурнăçа лайăх кĕртсе пыраççĕ. Ку колхозсенче выльăхсем мăнтăр. Витесене вĕсем яланах таса тытаççĕ. Выльăхсене пăхас, вĕсен продуктивлăхне ӳстерес ĕçри çак колхозсен паха опычĕсем ытти колхозсемшĕн те усăллă пулмалла.

А. МАКАРОВ.

Райçĕрĕç пайĕн зоотехникĕ.

Ватти те, çамрăкки те ĕçре

СĔНТĔР. Çак кунсенче пирĕн халăх нихăçанхинчен те лайăхрах ĕçлеме тытăнчĕ. Мирлĕ строительство вăхăтĕнчи шухăш-кăмăлсем пĕтсех пыраççĕ. Кашни çын хăйне социализмлă тăван çĕршыва сыхлама мобилизацленнĕ тесе шутлать.

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ Сталин юлташ радио тăрăх тухса сăмах каланă ятпа Оринино ялсоветĕнчи пур колхозсенче те митингсем пулса иртрĕç. Колхозниксем Правительство пуçлăхĕ, халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ чĕнсе каланине темиçе хут вăйлă ĕçленипе, тимлĕ те сисĕмлĕ пулнипе ответлеççĕ. Çак кунсенче ватти те, çамрăкки те вăрçă вăхăтĕнче кирлĕ пек ĕçлеме тăрăшать. «Восток» колхозри пионерсем çумкурăксене çумланă çĕрте, ватă колхозниксем ялхуçалăх машинисемпе кӳлмелли таврашсене юсанă çĕрте ĕçлеççĕ. «Красное Сормово» колхоз шкулне вĕренӳ çулне хатĕрленме пулăшать. 100 кубла метр вутă турттарса килсе панă.

Кăçал ялсоветра çĕнĕрен икĕ шкул тăваççĕ. Пĕр шкулне августăн 1-мĕшĕнче туса çитерме палăртнăччĕ. Ана срокчен, июлĕн 15-мĕшĕччен, туса çитереççĕ. «Красное Сормово» колхозра фельдшер пункчĕ пулать. Строительствăна августăн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлеççĕ.

«Восток» колхоз çак кунсенче 40 ĕне вырнаçмаллăх çĕнĕ вите туса лартрĕ. Наряд тăрăх строительство ĕçне 15 кунта пурнăçа кĕртме пăхнă пулсан, 9 кун хушшинче пурнăçа кĕртрĕç. Строительство бригадирĕ Егор Сальников юлташ çапла калать:

— Манăн икĕ ывăл фашистла ирсĕрсене хирĕç çапăçаççĕ. Эпĕ колхозра ударлă ĕçлесе, тăван çĕршыв оборонне ытларах çирĕплетме пулăтатăп.

И. НИКОЛАЕВ.

Легендарлă Чапаев

1.

Нумай çулсем иртрĕç ĕнтĕ легендарлă Чапаев вилнĕренне, анчах та унпа тĕл пулнисене питĕ аван астăватăн! Ачасем «Чапаевла» выляннине пăхатăп-и эпĕ, е Чапаева киноэкран çинче пăхатăп-и, е тата 1918—1919 çулсенчи боевой вĕри вăхăтсем çинчен çырнă литературăна вулатăп-и,—çав минутăсенче ман куç умне яланах Чапаев образĕ тухса тăрать.

Мĕнле хĕрӳллĕн ĕмĕтленетчĕ Чапаев Совет çĕршывĕ клас тăшманĕсенчен пуçĕпех тасалса çитес вăхăт çинчен! Мĕнле хĕрӳллĕн ĕмĕтленетчĕ вăл аслă, телейлĕ, социализмлă пурнăç çинчен!

— Çитет, епле пулсан та çитет вăл вăхăт,—тетчĕ Василий Иванович часчасах.—Шурă вăрă-хурахсене часрах пĕтересчĕ кăна...

Вăл вăхăт ситрĕ.

Чапаев вăтăр икĕ çулта вилнĕ. Унăн пурнăçĕ—ĕççыннин пурнăçĕ — революциччен тĕрлĕ хурлăхпа, йывăрлăхсемпе тулли пулнă, 1917 çулти Октябрь хыççăн—чаплă, паттăрла ĕçсемпе тулли пулнă.

Халăх ывăлĕ Чапаев—пирĕн партин историне, хамăр çĕршыври рабочисемпе хресченсен социализмлă революцишĕн, совет власĕшĕн паттăрла кĕрешĕвĕн историне яланлăхах кĕрсе юлнă герой-военоначальниксен ячĕсем шутĕнче тăрать.

2.

Паттăр 25-мĕш дивизин начальникĕ пулнă Чапаевăн боевой çулĕн чи чаплă пайĕ вăл 1919 çулти февраль уйăхĕнче çар Академинчен Хĕвелтухăçĕнчи фронта тавăрăннăранпа пуçланнă.

Чапаева 25-мĕш дивизие Михаил Васильевич Фрунзе янă,—вăл Чапаевăн паллă пултарулăхне тӳрех тивĕçлĕн хаклама пулнă.

Чапаев вăл дивизие март уйăхĕнчен пуçласа хăй вилес кунченех—сентябрĕн 5-мĕшĕченех ертсе пынă. Çак кĕске вăхăтрах 25-мĕш дивизи вунпар пысăк çапăçусем туса ирттернĕ, вĕсем яланах ăнăçлă пулнă.

Чапаев маневреннăй действисем туса ирттерес тĕлĕшпе калама çук паха тĕслĕхсем кăтартса панă. Унăн часĕсем тăшмана хирĕç час-часах ытти чассем пулăшасса кĕтмесĕрех çапăçнă. Чапаевăн юратнă маневрĕ—тăшмана обход тăвасси, пуринчен ытла тата—тавраран çавăрса илесси пулнă. Час-часах Чапаев, тăшмана улталамa, уйрăм чассене тăшманран аякалла илсе кайнă, унтан тăшмана флангсенчен хăйĕн тĕп вăйĕсемпе çапса аркатнă.

Çар специалисчĕсем час-часах Чапаевăн паллă «ĕçхĕлĕ» çинчен калаçаççĕ: Чапаев яланах флангсенчен пĕринче çарсен вăйлă ударнăй группине пухса тăратма тăрăшнă, вара вăл группа çапăçăва чи ответлă тапхăрта çеç кĕнĕ.

Çар специалисчĕсене Чапаев планĕсен хăвăртлăхĕ, хăюллăхĕ, палăртнă задачăсене активлăн пурнăçа кĕртни тĕлĕнтернĕ. Яланах малалла пыраканскер, Чапаев нихçан та каялла чакман пулнă.

Чапаев дивизии похочĕсене тĕпчесе вĕреннĕ специалистсем 25-мĕш дивизин 73-мĕш бригади 1919 çулти апрель уйăхĕнче, Боровка шывĕ çинче, Бузулукран çурçĕр еннерех мĕнле действи тунине илсе кăтартаççĕ.

М. В. Фрунзе вăл бригадăна Хĕвелтухăçĕнчи фронтăн ударнăй группи пухăннă района хӳтлесе тăрас задачă панă,—çав ударнăй группăн Атăл еннелле наступлени туса пыракан Колчак çарне флангран пырса çапмалла пулнă. Ударнăй группăна пухса çитермен мĕн-ха, анчах Бузулука шурриссен 11-мĕш Уральски дивизийĕ çывхарма пуçланă. 73-мĕш бригадăн пассивлă задача кăна пулнă пулин те, Чапаев, бригадăн действисене ертсе пырассине хăй çине илнĕскер, хăй наступлени пуçласа ярса белогвардеецсен дивизине питĕ хытă аркатнă.

Çакăн çинчен çырса кăтартнă полковник Болтин тата тепĕр интереслă тĕслĕх илсе кăтартать,—ку тĕслĕх Чапаевăн боевой творчестви шаблонсенчен мĕнтери аякра тăнине пĕлтерет. 1919 çулти май уйăхĕнче дивизи Бугульма еннелле пынă чух, Чапаев хăйне хирĕç шурриссем пыни çинчен пĕлсен, вăл сарлака фронтна маршевăй йĕрке тунă, бригадăсене полковой колоннăсемпе пыма приказ панă. Çакна пула вара белогвардеецсене тӳрех хĕрлĕ полксен паха вăйĕсем çавăрса илнĕ. Çак çапăçусенче пĕрин хыççăн теприне, шурриссен икĕ дивизине тĕпипех çапса аркатнă.

3.

Уфа патĕнчи операцине 25-мĕш дивизи Колчака хирĕç кĕрешесси вĕçленнĕ. Бузулукран пуçласа Уфана çитиччен пулса иртнĕ çапăçусенче пулнисем каласа кăтартнă тăрăх, Чапаевăн паттăр дивизийĕ иртсе пынă çулсем çинче белогвардеецсен аттисом, амуницийĕ, офицерсен погонĕсем йăвансa выртнă. Чапаевецсем вĕсене çавтери хăрушла вăйпа çĕмĕрнĕ пулнă.

Уфа патĕнче Колчакăн хĕрлисене хирĕç татăклă çапăçу тумалла пулнă, мĕншĕн тесен Уфа унăн пит те паллă стратегиллĕ пункт пулса тăнă.

М. В. Фрунзепе В. И. Чапаев çакна пит те лайăх ăнланнă, çавăнпа та Колчакăн планĕсене аркатма çеç мар, Уфа патне илсе пынă унăн чи паха вăйĕсене пуçĕпех çапса çĕмĕрмешкĕн пур кирлĕ мерăсене те йышăннă.

1919 çулти июнĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле 25-мĕш дивизин часĕсем Белая шывĕ урлă каçнă, анчах вĕсем çине çавăнтах шурриссен чи паха вăйĕсем—каппелевски полксем тапăннă.

Положени калама та çук йывăр пулнă. Çакăнта вара Фрунзепе Чапаевăн хăйсен личнăй примерĕ пĕтĕм ĕçе тата паха панă. М. В. Фрунзе хăй, аллине винтовка тытса, хĕрлисен цепьне малалла илсе кайнă. В. И. Чапаев, хăйне пуçран суранланă пулин те, стройран тухман, хăйĕн хыççăн боецсене малалла илсе пынă.

1919 çулти июнĕн 9-мĕшĕнче чапаевецсем Уфана йышăннă.

В. И. Чапаевăн çапăçусенчи паттăрлăхне Совет правительстви палăртнă, ăна Хĕрлĕ Ялавăн боевой орденне панă. Республикăна Реввоенсовечĕн приказĕнче çапла каланă:

«25-мĕш стрелковăй дивизин Начальникĕ Василий Иванович Чапаев юлташ «Хĕрлĕ Ялав» орденĕпе çак паллă ĕçсемшĕн наградăланать.

Революциллĕ пуçару тăрăх отряд организацилесе, 1918 çулти май, июнь, июль, август тата сентябрь уйăхĕсем хушшинче Саратовско-Николаевский района малтан Уральски казаксем, унтан чехословаксем те тапăннинчен çирĕппĕн оборонăласа тăнă. 1918 çулти октябрĕн 6-мĕшĕпе 7-мĕшĕнче отряда (Николаевски дивизие) чехословаксем йышăннă Самара хули патне пынă çĕрте ертсе пырса, Самарка шывĕ урлă чăн малтан каçнисемпе пĕрле каçнă, çапла майпа хăйĕн чаçне, тата кӳршĕри чаççене хавхалантарнă, ку вара чаççене хăвăрт каçарса Самара хулине йышăнма пулăшнă. Хăйĕн чаçĕсене яланах малта ертсе пырса, вăл малти цепьсенче паттăрăн тата пултарулăпа çапăçнă, пĕрре çеç мар сураланнă, контужен пулнă, анчах яланах стройра юлнă. Унăн ăста маневрĕсене пула, александрово-гайски бригада Толстов генералăн казак бандисене çапса аркатнă, ку вара пире Урал облаçне çавăрса илме май панă. 25-мĕш стрелковăй дивизи начальникĕ вырăнне назначени пирсан, Самара пит те хăрушла положенинче пулнă кунсенче, тăшман унран икĕ переход çеç аякра тăнă чух, ăна хăйĕн дивизийĕпе тăшманăн наступлени тăвакан вăйĕсен центрне, Бугуруслан патне кăларса тăратнă; çине тăрса, хăвăрттăн пыра-пыра çапнипе, ăста маневрсем тунипе, вăл тăшманăн наступленине чарнă, вара пĕр уйăх та çурă хушшинче Бугуруслан, Белебей тата Уфа хулисене илнĕ, çапла тунипе Вăтам Атăл тăрăхне çăлнă, тата Уфимско-Самарски тырăллă района каялла тавăрнă. Уфа патĕнчи çапăçусенче (кăçалхи июнĕн 8-мĕшĕнче) Белая шывĕ урлă каçнă чух, операцине хăй личнo ертсе пынă, пуçĕнчен суранланнă, анчах вăл çавăн çине пăхмасăрах стройран тухман, операцие малаллах илсе пынă, вара çав операци Уфа хулине йышăннипе вĕçленнĕ».

4.

Чапаев пĕлӳсенчен йĕрĕннĕ, çапăçури практикăна теорипе мала хунă, текен çынсем тупăкаланă. Çапла калани вăл—çĕртен пĕлĕт епле инçе, тĕрĕслĕхрен çавăн пекех инçе пулса тăрать. Чапаев чĕреренех вĕренӳ патне турттăннă. Ун çинчен ĕмĕтленнĕ. 1918 çулта Çар Академинче чи малтан вĕренме тытăнникем хушшинче никам та мар—Чапаев пулнă. Вĕренĕвне вăл пит те тĕплĕн тытăннă. Мускавран хăйĕн тусĕсем патне вăл пĕтĕмĕшлĕ пĕлĕвĕсене пуянлатмашкăн вĕренме килтĕм, тесе çырнă,—пĕлĕвĕсем çителĕксĕр пулнине вăл пит те лайăх сиссе тăнă.

Чапаев йĕркесĕр, дисциплинăсăр çын пулнă тени те намăссăр элек пулса тăрать. Ку элеке ăна троцкистла изменниксем шутласа кăларнă, ун пек элеке вĕсем пĕр Чапаева хирĕç кăна мар, Щорса хирĕç те, тата граждан вăрçи вăхăтĕнче халăх хушшинчен тухнă, Ленинпа Сталин ялавне çӳлте çăкласс пынă ытти паттăр полководецсене хирĕç те сарнă.

Чапаев паттăр, хăраман, хастарлă çын пулнă, анчах кунпа пĕрлех вăл асăрхануллă, тĕплĕн шухăшлама пĕлекен çын пулнă. Вăл ниççан та йĕркесĕр кĕрсе кайман, хăйĕн чаçĕсене кирлĕ мар хăрушлăх айне тăратман.

Чапаев штабра ларма юратман, вăл яланах ĕçе татса паракан çапăçусем пуçланнă вырăнсене, хăйĕн боецĕсемшĕн хăрушлăх пулса тăнă вырăнсене пырса тухнă. Анчах çапах та вăл штабра мĕн пулса пынине питĕ лайăх пĕлнĕ, çарсене ертсе пырас ĕçĕн йĕркисене пĕлнĕ, çапăçура командир мĕнле вырăн йышăнассине пит лайăх ăнланнă.

Вулакан кинофильмри пĕр пит те паха эпизода астăвать пуль,—унта Чапаев котелок, çĕрулми, лирус тата комиссар чĕлĕмĕпе усă курса, хăйĕн комбригĕсенчен пĕрне командирăн çапăçу вăхăтĕнче ăçта пулмалли çинчен вĕрентнине кăтартнă.

— Сăмахран каласан—отряд походнăй йĕркепе пырать.. Командирăн ăçта пулмалла?—шăпĕрĕ Чапаев комбригран. Анчах халех ответ памĕ:—малта, чаплă лаша çинче!.. Тăшман курăнчĕ те, орудисенчен пеме тытăнчĕ... Ăçта пирĕн командир?... Каллех малта пулма пултарать: пĕр сыннa тĕллесе орудисенчен никам та перес çук!.. Халĕ... тăшман сывăхрах пычĕ те, пулеметсенчен пеме тытăнчĕ. Калăпăр, унăн кунта вунă пулемет, а кунта пĕр-икĕ пулемет... Командирăн ăçта пулмалла?

Комбриг аллипе тĕртсе кăтартрĕ:

— Çакăнта, вуннă пулнă çĕрте...

Чапаев ун çине кӳренӳллĕн пăхрĕ.

— «Çакăнта»... Шухăшлама пĕлес пулать! Вĕсене сана персе ӳкерме ăçта çăмăлтарах? Паллах—вуннă пулнă çĕрте... Апла пулсан, санăн лере, иккĕ пулнă çĕрте пулас пулать, мĕншĕн тесен командирсăр боецсем те пĕтме пултараççĕ.

Комбриг вăтанарах хулса илчĕ. Чапаев малалла каларĕ:

— Тăшман атака пуçласа ячĕ... Командирăн ăçта пулмалла?

Комбриг ответ памĕ:

— Малта пулмалла.

Чапаев:

— Хăйĕн отрячĕн тылне хуçмалла, вара пĕр-пĕр çӳллĕрех вырăна тăрса,

БОЕВОЙ ЭПИЗОДСЕМ

Пограничниксен паттăр ĕçĕ

Фашистла ирсĕрсене çапса салатассине мухтавлă совет пограничникĕсем ăна малтан хăйсем сине илнĕ. Вĕсем пирĕн тăван çĕршывăн таса чиккисене тăшмансем килсе тапăнасран геройла сыхланă. Хăюллă пограничниксен пĕчĕк ушкăнĕсем тăшмансен пысăк соединенийĕсене хирĕç паттăрăн çапăçнă. Вĕсем çак кĕрешӳре совет патриотизмĕн тĕлĕнмелле хăюллăхне, паттăрлăхне тата героизмне кăтартнă. Нумай йышлă тăшмансен сĕмĕрлĕхне çапса аркатнă пограничниксем çинчен халĕ пĕтĕм çĕршыв тăрăх, Балти тинĕсĕнчен пуçласа Хура тинĕсе çити тăсăлса выртакан аслă фронт тăрăх чыслă мухтавлăх сӳрет.

Пулеметсемпе миномĕтсен çăмăрĕ

Лейтенант-орденоносец Бондарь юлташ красноармеец-пограничниксемпе — Иванов, Гекманов тата Матянин юлташсемпе пĕрле хамăр çĕршывăн кăнтăр-кĕвеланăç чиккинче дозорта пуллă. Çак вăхăтра ирсĕр те чее тăшмансем хăйсен танкĕсем хӳттипе пырса, Совет çĕршывĕ çинелле тискеррĕн шуса килнĕ.

Тăшман пирĕн чикĕ урлă çĕлен пек шуса каçса, пĕр юханшыв сыранĕ хĕррине пырса тăнă, вăл çав шыв çинчи кĕпер патнелле туртăннă. Кунта вĕсене мĕнле пулсан та тытса чармалла пулнă. Анчах мĕнле? Пограничниксен пысăках мар отрячĕ мĕн тума пултарнă пултăр çакăн пек чух?

Çĕлăнăç çакăнта çеç: тăшмансем хăрлăхпа ăмсанса пыракан çав кĕпере хăвăртрах аркатмалла, тăшмансен çулне пӳлмелле.

Взрывчатăй ăпаласем хăвăртрах илсе, лейтенант Бондарь ушкăнĕ тăшмансене хирĕç — малалла вирхĕннĕ. Фашистсене кĕпер çинĕ кĕме памалла мар, — боевой приказа хăвăртрах пурнăçламалла.

Пограничниксем, нимĕн шикленсе тăмасăр, хăйсен боевой тĕллевне пурнăçлама васканнă. Юханшывăн тепĕр енчен пирĕн пограничниксем синелле пулеметсемпе миномĕтсенчен вут-хĕмлĕ çăмăр пĕрхсе тăнă. Çапах та паттăр пограничниксем пĕртте шикленмен.

Акă кĕпер. Взрывчатăй ăпаласене хăйсен вырăнне майлаштарса кунă. Пограничниксем аяккалла пăрăннă. Тăшман танкĕсем кĕпер çинелле шуса пынă. Малтанхи танк кĕпер çине кĕрсенех сывлăш хăрушла янраса кайнă, кĕпер сăвайĕсемпе танк çĕмрĕкĕсем çӳлелле сирпĕннĕ, танк çинчи фашистсем шыва путнă.

Тăшман бомбардировщикĕ пĕтни

Комсомолец Николай Заккер пострах пулнă, вăл шыв урлă выртакан тимĕрпе бетонран тунă кĕпере сыхланă. Артиллери, пăшалтан пенĕ сасăсем лăпланман. Пенĕ сасăсем хĕвеланăç енчен ку еннелле сывхарса килнĕ.

Николай Заккер сыхă тăнă. Кашни пенĕ сасă вăхăтĕнчех хăй сыхласа тăракан кĕпер талккишех чĕтреннĕ пек туйăннă.

Чикĕ тăрăх аслă фронт тăсăлса выртнă. Пирĕн территори çине сĕмĕрленсе каçма хăтланнă тăшмансене Хĕрлĕ Çар часĕсем вăйлăн хĕстернĕ, чи хаяр çĕлен-халтасен — фашистсен кĕтӳне айăккинелле сирсе янă.

Ир. Заккер юлташ çивĕччĕн пăхса тăнă. Вăл курнă: пĕр пысăк сăрт çинче пирĕн хăюллă истребительсем фашист-сен бомбардировщикĕсене сывлăшра ним юлмиччен аркатса тăкнă. Çав вĕхăтрах вăл пирĕн истребительсем, боевой заданине ăнăçлăн пурнăçласа, хăйсен выраннне лăпкăн вĕçсе килнине асăрханă.

Кăвак инçет. Боец çав кăвак инçетелле тимлĕн тинкерсе пăхнă.

Лăпкă сывлăш сасартăк чĕтресе хумханнă. Çав самантрах кăвак пĕлĕтре тăшман самолечĕ куранă. Вăл пит çӳлте вĕçнĕ, кăвак тӳпере хура пăнчă пек çеç палăрнă.

Самолет кĕпер патнелле чăмнă. Мотор шăп пулнă. Заккер часах çакна ăнланнă: фашистсем, пирĕн чи паллă коммуникацине татас тесе, кĕпер çине бомба пăрахасшăн пулнă. Анчах фашистсем йăнăшнă. Пирĕн çивĕч те хăюллă боец, станковăй пулемета алла илсе, тăшман самолечĕ çине хăвăртăн тĕлленĕ, çав самантрах гашетка çине пуснă.

Фашистсен бомбардировщикĕ Заккер тĕлĕнчен аялтанах вĕçсе кайнă. Ун хыççăн, вăхăт нумай та иртмен. Заккертан инçетре мар.. бомбăсем пĕрин хыççăн тепри хăрушшăн янăраса çурăлнă. Анчах тăшман бомбă хăй ĕмĕтленнĕ тĕле ӳкмен, вăл шывăн тепĕр енчи сыранĕ çине ӳкнĕ. Çыранăн тепĕр енче типĕ хăйăрпа нӳрĕ тăпра хутăшса сывлăша чăмăркан-чăмăркан вĕçсе хăпарнă. Тăшман самолечĕ каллех каялла çавăрăннă, вăл каллех кĕпер патнелле вĕçсе пынă. Тăшманăн тăранма пĕлмен çăханне хирĕç пирĕн погранични вĕçе-вĕçĕн хаяр та вĕри пулясем кăларса янă. Çав самантрах тăшман бомбардировщикĕн фюзеляжĕн малти пайĕнче çаг-çутă çулăм ялкăлса кураннă. Фашистсен самолечĕ тивсе илчĕ. Заккер кăларса янă пулясем хăйсен ĕçне тунă.

Çулăм хыпса илнĕ бомбардировщик, ниçта кайса кĕме пĕлмен енне, хĕвеланăçнелле çавăрăннă, вăл нумай та кайман, çĕр сине пуçхĕрлĕ ӳксе тăрăннă.

Çак вăхăтра чугунçул постинче тăракан боецсен отрячĕ кĕпер патнелле васкаса чупнă, пирĕн боец сине тăшман бомбардировщикĕ тапăннине красноармеецсем катаранах курнă. Çак хăюллă отряд нимрен те шикленмен: фашистсен самолечĕн экипажне — тăватă çынна тытăкана çавăрса илнĕ.

Пулеметчик Петров

Н-ски погранзаставăри политрук заместителĕ В. В. Петров юханшывăн тепĕр енче выртнă. Вăл хăйĕн пулеметĕнчен темиçе çĕр пуля пĕр харăс кăларса янă. Вăл пулясем пурте тăшман çамки çине пырса перĕннĕ.

Фашистсен батальонĕ совет çĕрĕн территорийĕ çине тискеррĕн шăвăнса пынă. Вĕсем нумайăн пулнă. Пирĕн погранични хăйĕн чи сывăх тусĕпе — пулеметпа çеç выртнă.

Тăшман ушкăнăн-ушкăнăн малалла шунă. Погранични Петров тăшманăн малти икĕ ушкăнне перçе амантнă. Тăшман сĕмĕрленнĕ. Петровран инçе мар вырăнта гранатăсемпе минăсем кĕрлетсе çурăлнă, çĕр кисренсе тăнă.

Вилĕм инçе мар. Анчах çав вăхăтрах пирĕн хăюллă погранични ушкăнĕ çак вĕри те шăрăх, хăрушă вырăна пырса çитнĕ. Тискер тăшманăн ирĕксĕрех чакмалла пулнă. Пулеметчик Петров вилĕмрен çăлăннă.

В. ЗНАМЕНСКИЙ.

Действующи арми.

Танксен çапăçăвĕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, июлĕн 7-мĕш (ТАСС спецкорĕсем). Слепцов юлташ ертсе пыракан танковăй часть Р. районĕнче тăшманăн мотомеханизированнăй колоннисене пĕтерсе тăкма задани илнĕ. Çак заданине ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ, — кун çинчен Совет Информаци Бюровĕ июлĕн 5-мĕшĕнче пĕлтернĕччĕ.

...Ирхине, тул çутăлас умĕн боевой машинăсем атака тума исходнăй позици йышăннă. Слепцов наступлени тума приказ панă. Вăл хăй йывăр танксен колоннине илсе пынă.

Вăрмантан тухнă-тухманах машинăсем çине пулясем тивме пуçланă. Вăрманта пытанса тăнă тăшманăн авиадесанчă пулеметсенчен пеме тытăннă. Малалла кайма чарăнмасăр, танксем пеме пуçланă. Пулеметсетчен пĕр чарăнмасăр персе тăнине нимĕç десантникĕсене сапаласа янă.

Танксен колонни шоссе çулĕ çине тухнă. Марш хăвăртлăхне ӳстернĕ Сасартăк фашистсен темиçе бомбардировщикĕ сиксе тухнă. Вĕсем танксене пĕтерес шутпа, фугаснăй тата зажигательнăй бомбăсем пăрахнă. Пирĕн машинăсен колоннисем хăвăрт сапаланнă. Тăшман пĕр танка та слеплеме пултарайман.

Колоннăсем хăвăрттăн вунпăр километр малалла кайнă. Çамрăк вăрман хыçĕнче нимĕçсен танковăй пысăк соединенине тупса палăртнă. Çапăçу пуçланнă. Совет танксисĕсем персе тăнине тăшман машинисене пĕрин хыççăн теприне стройран кăларнă. Нимĕçсем тарса хăтăлас шутпа, пăтрашса, танксенчен сике-сике тухнă. Анчах вĕсене пур çĕртен те пулеметсенчен персе тăнă. Çапăçу хыççăн çапăçнă выран тăшман виллисемпе витĕннĕ.

Çавах та тăшмана пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкман пулнă. Тăшман контрудар тума хăйĕн вăйне пухма хăтланнă. Пирĕн мухтавлă танкистсем тата хытăрах хĕснĕ. Тăшман чăтса тăрайман, каялла чакма пуçланă. Слепцовăн боевой машинисем фашистсен танкĕсене хыçалтан хăваласа, çĕмĕрсе тăкнă.

Çапăçу пулнă çĕртен чылай аякри вырăнтан тăшман пирĕн танксем çине пеме пуçланă.

Противникăн артиллери батарейине çĕмĕрсе тăкмалла — çакăн пек приказ илнĕ пирĕн танксен групписенчен пĕри. Кĕске срок хушшинчех çак операцине ăнăçлăн пурнăçланă.

Темиçе сехет хушши пынă танксен çапăçăвĕ нимĕçсене хаярăн çĕмĕрсе тăкнине вĕçленнĕ. Çав çапăçура совет танкисчĕсем нимĕçсен виççĕр танкне яхăн пĕтернĕ, инçете перекен 12 орудди тыртса тата 500 çын ытларах тытăкана илнĕ.

* * *

Совет танкисчĕсем ытти йышши войскăсен боецĕсемпе таччăн сыхăнса, паттăрăн та хăюллă çапăçаççĕ. Н-ски чăсе çакăн пек приказ панă: юханшыв урлă каçмалла, Н. ялне кĕмелле тата унта нимĕçсен пухса тăратнă мотомехчăсне тытса илмелле.

Капитан Касьян ертсе пыракан мотомеханизированнăй батальон, йывăр 20 танк пулăшса пынипе, ирхине разведкăна тухнă. Батальон шыв урлă каçса А. ялĕн районне тухнă. Лейтенант Талан ертсе пыракан рота сыхланса пынă. Рота курăнмасăр ял сывăхнех ситсе тăнă. Лейтенант Талан обстановкăна тĕплĕн тĕрĕслесе тухнă, тăшманăн огневой точкисене тата танксем пухăнса тăнă вырăнсене палăртнă.

Разведка тупнă сведенисемпе усă курса, танкистсем тăшмана тимлĕн атакăланă. Тапăну кĕтмен çĕрте пулнă, нимĕçсем пăтрашса кайнă. Орудисенчен пеме пуçланă. Артиллеристсем тăшманăн нумай йышлă огневой точкисене хăвăрт пĕтерсе тăкнă. Çакă пирĕн танкистсене мĕнпур вăйпа нимĕçсен колоннисем çине тапăнма май панă.

Çав çапăçура совет танкисчĕсем хăюллăхпа паттăрлăх сахал мар кăтартрĕç.

Кĕçĕн лейтенант Юхнич танкне фашистсен пилĕк танкĕ çавăрса илнĕ. Хăюллă экипаж тăвата танка персе пĕтерсе тăкнă. Юлашки танк юлнă. Юхнич юлташ хăйĕн танкне пысăк хăвăртлăхпа тăшман танкĕ çине тăрантарса, тӳнтерсе янă.

А. ялĕшĕн пынă çапăçура нимĕçсен орудисемпе танкĕсене питĕ нумай çĕмĕрсе тăкнă.

А. КРАСНОВ.
З. ЛИПАВСКИЙ.

Пĕччен виççĕне хирĕç

Çителĕклĕ таран груз илнĕ хыççăн, Лоскутов самолечĕ, разведка тума тата çар об'екчĕ çине бомбăсем пăрахма, тăшман тылне тухса кайнă.

Заданине ăнăçлăн пурнăçланă хыççăн экипаж базăна тавăрăннă. Сасартăк сывлăш карапĕ çине тăшманăн виçĕ истребителĕ тапăннă. Вĕсем çӳлтен, хĕвел енчен пырса тухнă. Тăшман самолечĕсем сывăхах вĕçсе пынă. Анчах та çак самантра совет машини çинчен пулеметсем шатăртатма пуçланă. Вĕсем фашистла çăхансене металпа чыхлантарнă. Тăшмансем аяккалла пăрăннă. Вĕсене çавтери хытă çунтарнă: виçĕ истребителе хирĕç советăн пĕр самолечĕ çапăçнă! Тăшман истребителĕсем пирĕн бомбардировщикăн пĕр моторне стройран кăларма пултарнă. Çапах та Лоскутов машинăна пит чаплăн илсе пынă, тăшман тапăнăвĕнчен çăлăнса тухнă.

Персе çĕмĕрнĕ самолет хăйĕн хăвăртлăхне чылаях чакарнине курсан, тăшмансем тата хытăрах урса кайнă. Пĕр машини, пикировка туса, атакăна ыткăннă. Анчах штурман Котов пулеметран кăларса янă черет тăшман машинине пикировка туса çĕр сумне çитичченех «вĕçмелле» туса хунă.

Акă тата бомбардировщикăн иккĕмĕш моторĕ чарăна-чарăна ĕçлеме пуçланă. Самолет аялалла хыттăн анма тытăннă. Тăшман тапăнăвне геройла сиресире пырса, экипаж машинăна тăван çĕршыв патне лайăххăнах илсе çитернĕ, юрăхлă вырăн тупса çĕре анса ларнă.

Г. ОШАРОВСКИЙ.

Действующи арми. (ТАСС спецкорĕ).



Халăхсен çулпуçĕ Сталин юлташ Хĕрлĕ Çара мĕнпур вăйран пулăшма чĕннине ответлесе, Мало-Собачкино ялĕнчи «Коммунар» колхоз (Сĕнтĕрвăрри р.) государствăна 3,5 тонна тырă пачĕ. УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: хĕрлĕ обоз. Г. КОСТИН фото-ӳкерчĕкĕ.

Агитаци ĕçне лайăх туса пыраççĕ

ИШЛЕЙ. Чурачăх ялсоветне кĕрекен колхозсенче политикăллă агитаци ĕçне лайăх туса пыраççĕ.

В. М. Молотов юлташ радио тăрăх калана сăмах çинчен, Сталин юлташ сăмахĕ çинчен, СССР Верховный Совет Президиумĕ юлашки вăхăтра кăларнă Указсем çинчен, иртĕнсе кайнă Германи фашизмĕ совет çĕршывĕ çине бандитла тапăнса кĕни çинчен тата Совет Информаци Бюровĕ паракан сводкăсем çинчен колхозниксемпе колхозницăсене колхозри агитаторсем тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Агитаторсем А. Иванов, Г. Александров, А. Борзаев юлташсем уйрăмах тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем пĕтĕм ăнлантару ĕçне хуçалăхлă задачăсемпе сыхăнтараççĕ.

Ăнлантару ĕçне лайăх туса пынине пула ялсоветри колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем государство умĕнчи тăрăмсене вăхăтра тултарса пыраççĕ. Ялсоветри пур колхозсем те аш-какай парассин çурçул планне тултарнă. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз государствăна 1941 çулăн 30 центнер тырă леçсе пачĕ. Сĕт-çу, çăмарта обязательствин планĕсене тултарасси те ăнăçлăн пырать. Заем укçи пухас плана ялсовет 63,4 процент тултарнă.

Çулĕр строительствинче те ударлă ĕçлеççĕ. Пур колхозсем те уборкăна хĕрсех хатĕрленеççĕ.: уя тислĕк тăкса пĕтернĕ, колхозниксем хĕрсех çум çумлаççĕ.

Халĕ агитаторсем ĕçсыннисем хушшинче Оборонăн Государственнăй Комитечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ радио тăрăх тухса калани сăмаха ăнлантараççĕ.

Е. ТЮРИН.

ПАРХАТАРЛĂ ĔÇСЕМ

Урса кайнă фашистла бандăна хирĕç пыракан отечественнăй вăрçă колхозлă ялсенчи ĕç çĕкленĕвне татах вăйлатрĕ. Колхозлă ялта ăста пăхнă унта хĕрӳллĕ ĕç пырать.

Торикассинчи Урицкий ячĕпе тăракан колхоз уйхирĕнче вăйлă тырпул ӳсет. Колхозниксем иртен пуçласа каçченех хирте ĕçлеççĕ. Арçынсемпе хĕрарăмсем, ватти-вĕтти пĕтĕмпех, умра тăракан ĕçсене кĕске срокра вĕçлесе çитерме тăрăшаççĕ. Вĕсем çакна лайăх ăнланаççĕ: мĕн чухлĕ лайăхрах ĕçлетпĕр, ирсĕр тăшмана тăван çĕршыв çинчен çавăн чухлĕ хăвăртрах шăлса ывăтатпăр.

Колхоз тырпул пухса кĕртме хатĕрленет. Тырă хумалли амбарсене тасатма пуçланă, уборка вăхăтĕнче кирлĕ ялхуçалăх машинисене ремонтлаççĕ.

Хураварти «Заветы Ильича» колхозра уя тислĕк тăкса çĕртме тумалли çĕр лаптăкне пĕтĕмпех суханалаçа пĕтерчĕç. Колхозра халиччен курман çăкленӳ палăрать. Колхоз ĕçĕсене вунпăр подростоксемпе шкул ачисем хутшăнаççĕ.

Колхоз председателĕ Федоров юлташ колхозниксем çинчен çапла каласа парать:

— Колхозниксем хăй пек хастарлă пулнине халиччен курманччĕ-ха эпĕ. Ытти чухне те аван ĕçленĕ, халĕ уптан темиçе хут ытларах аван ĕçлетпĕр.

Кашни колхозник, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе, колхоз стройне татах вăйлатма тăрăшать. Колхозниксем ирсĕр бандитсене хăйсен пĕтĕм курайманлăхĕпе ылханаççĕ. Вĕсем çапла каланă:

— Фашистла çĕлен-халтасене хăвартлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ çĕр пичĕ çинчен немĕн хăварми шăлса ывăтĕç. Пирĕн упăшкасемпе пиччесем фронтра, эпир хамăр кунта, колхозăн анлă уйхирĕнче, тăшман валли вилĕм хатĕрлетпĕр. Тырпул ытларах туса илсе, Хĕрлĕ Çара пулăшатпăр. Тăшман хăйĕн пуçне часах çухатĕ.

Колхозра пысăк ĕçсем пыраççĕ. Государствăна 1941 çулăн тырă тăратма тытăнчĕç. Унпа пĕрлех ытти обязательствăсене — аш-какай, сĕт-çу, çăмарта тăратас плансене тултарчĕç. Виççĕмĕш Пятилеткăн (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заем укçине пĕтĕмпех тӳлесе татнă.

Колхозăн улăхра утă çитĕнет, уйрăш тăркана ларать, клевер чечекленет. Утă-улăм, тырпул пухса кĕртме колхоз тĕплĕн хатĕрленет. Колхозниксем силос хывмалли вырăнсем хатĕрлеççĕ. Силос хывмалли плана срокчен тата ытлашшипех тултарма тăрăшаççĕ.

Тăвайри «Сталинит» колхозра виççĕмĕш бригада улттăмĕш кун тислĕк тăкать.

«Сталинит» колхоз 145 гектар çинче çум çумланă. Колхозра государство умĕнчи обязательствăсене хальтерех тултарса пырассишĕн кĕрешеççĕ.

Ив. МОСЕЕВ.

çапăçăвăн пĕтĕм картинине сăнаса пымалла, мĕншĕн тесен унсăр отряда флангсенчен çавăрса илме пултараççĕ. Халĕ: отрядпа унăн командирĕн пултарулăх действисене пула, тăшмана каялла чакарма тытăннă, вăл тарма тытăннă, отряд ним йĕркесĕр таракан тăшмана хăвалать! Командирăн ăçта пулмалла? Каллех малта, чаплă лаша çинче, хулана чăн малтан, тăшманăн хулпуççийĕ çинчех пырса кĕмелле!.. Шухăшлама пĕлес пулать!

— Э-э-э!—тăсса илчĕ комбриг.—Анчах та эсĕ ху, Василь Иванч, кирлĕ пулсан, яланах малта пыратăн!..

— Ну, вăл—кирлĕ пулсан,—терĕ Чапаев, кулкаласа...

Чапаев калама çук пысăк, çирĕп дисциплинăллă çын пулнă,—кун çинчен вăл хăй пит те хисепленĕ М. В. Фрунзе панă приказсене пĕр сăмахсăрах пăхăнса пынă фактсем каласçĕç. Хăй енчен, Фрунзе та Чапаева питĕ хаклана, хисепленĕ. Дисциплинăсăр командир Фрунзе пек паллă пролетарилле полководец хисепленине, мухтанине кĕтсе илеймен пулĕччĕ.

Чапаев хăшпĕр генерал пулнă çынсем çине, тĕрлĕрен троцкистла этемсем çине пит те иккĕленсе, шанмасăр пăхнă. Халĕ, троцкистла-фашистла шпионсене пĕтĕмпех палăртса тăрăшыв çине кăларнă хыççăн, Чапаев çавăн пек çынсене хăй инстинктĕпех шанмасăр тăни тĕрĕс тулнине эпир лайăх пĕлетпĕр.

5.

Уфана илнĕ хыççăн чаплă 25-мĕш дивизие каллех Уральски фронта куçарнă. Унта Уральск хулине ирĕке кăлармалла пулнă,—ăна хӳтĕлекенсем, юн юхтарса вăйăрланса çитнĕ пулин те, хулана пур енчен хупăрласа илнĕ шурă казаксене чарса тăнă.

Чапаев бригадисем хăвăрт маршпа Урала хăтарма кайнă. Чапаевецсене халăх çавтери хаваслăн йышăннă.

Чапаев патне чи инçетри ялсенчен те ходоксем пынă.

— Пĕр сăмах та пулин кала,—ыйтнă хресченсем Чапаевран.—Шуррисем татах килĕç-ши, е эсĕ, тусăм, вĕсене пуçĕпех хăваласа ятăн?

Чапаев халăхпа Хĕрлĕ Çар çинчен тата вăл епле чаплă тĕллевсемшĕн çапăçни çинчен каласма питĕ юратнă.

— Пирĕнпе пĕрле пухăнса пырăр, — тенĕ вĕсене хирĕç Чапаев кула-кула,—вара шуррисем килмĕç!

Чапаев дивизийĕ сывхарни çинчен илтсен, шурă казаксем татăклă çапăçăва йышăнмасăрах, Уральск патĕнчен чакса кайнă.

Чапаевецсем Уральск хулине, музыкăпа, юрăсемпе пырса кĕнĕ. Хулари ĕçхалăхĕ хăйсене хăтаракансене пысăк хаваслăхпа кĕтсе илнĕ, пурте Чапаева сăнĕнчен кураççăн, унăн сăнне яланлăхах астуса юласшăн çуннă.

Полевой строительство работникĕсен отрячĕ (çак йĕркене çыракан автор çав отрядра пулнă) Уральска чугунçулпа пычĕ. Эпĕ ун чухне халь çеç Военно-инженернăй академин васкавлă курсне пĕтернĕччĕ те, мана поезд начальникĕ тунăччĕ. Манăн должноçе «старпо» тетчĕç (старший производитель).

Пирĕн строительсен отрячĕ хулара вырнаçнă пирвайхи кунсем хамăрăн хваттер хуçисемпе чăмманнипе, штабăн ертсе пыракан составĕпе калаçнисемпе, аслă начальствăпа паллашнипе иртрĕç.

— Чапай? Мĕнех вара? Аван çын вăл,—тенине илтеттĕм эпĕ пур çĕрте те.—Анчах вилес пекех буржуйсемпе пупсене юратмасть. Уральскри пупсем пурте тĕрмере лараççĕ. Ыттинчен тиркемелле мар çын...

Казаксем Гниловски хутор çине наступлени пуçланăччĕ. Чапаев, дивизи инженерне чĕнсе илчĕ те, Урал урлă кĕпер тума приказ панă. Калаçу кĕске пулчĕ:

— Акă мĕн: эсир манăн пата çав усал çĕлене çапса аркатма килнĕ тенине илтрĕм. (Усал çĕленĕ вăл—генерал Толстов). Манăн чăсене киргизсен еннелле каçармалла. Урал урлă кĕпер тăвас пулать. Кĕперĕ çавăн пек пултăр—тупăсем ан путчĕр.

— Есть, юлташ командующий..

Строительство штабĕнче тупăсем мĕн йывăрĕш тургинне, пĕр метр çине мĕн чухлĕ нагрузка тивнине шутласа кăларас вăрăм ĕç, пĕтĕмĕпе каласан—питех те академилле калаçусем пуçланчĕç. Юлашкинчен тин вара тавлашусем вĕриленме пуçларĕç.

Эпĕ Чапаев патне кайрăм.

— Юлташ командующий! Кĕпер тума пулать, анчах, паллах—эсир тĕрмере ларакан кулаксемпе пупсене пире памалла пулать, эпир тата арматан пăртак литмĕр илтĕмĕр... Вара пĕр уйăхран кĕпер хатĕр пулать.

Чапаев çапла ответ панă:

— Мана кĕпер виçĕ хунтан кирлĕ. Приказ паратăп сире—кĕпер виçĕ кунтан хатĕр пултăр, туса çитермесен — вара манăн сирĕнпе пачах урăхла калаçу пулма пултарать.

Эпир ку приказа епле пурнăçлассине сӳтсе-явма каллех ханашлу пухрăмăр.

Халĕ çав Ленинградран пынă пĕр инженерăн хушаматне астумастăп, — вăл çапла каларĕ:

— Мĕн-ха хуйха ӳкĕр эсир? Кĕпере пĕр талăкра та тума пулать, анчах та вăл çавăн пек пулать: тăваттăмĕш талăкĕнче вăл, паллах, тӳссе тăмасть ĕнтĕ...

Каллех Чапаев патне кайрăм:

— Çапла, юлташ командующий, хĕпер виçĕ талăкран пулать, анчах сире тӳррĕнех калатăп: тăваттăмĕш талăкĕнче каялла чакмалла пулсан—йĕмсене йĕпетме тӳр килет, мĕншĕн тесен ку вăхăт тĕлне кĕпер юхса каять.

— Чакмастпăр, Чапаев чакмасть! — ответ пачĕ Василий Иванович.

Чапаев «чакмастпăр!» тени пире хаваландарчĕ. Кĕпере виçĕ талăк çитичченех туса çитертĕмĕр.

Чапаев Гурьев çинелле, шурă казаксен çарне Каспи тинĕсне тӳнтерме тухса кайрĕ.

6.

Уральск таврашĕнче—отступлени пулас пулсан Чапаев дивизийĕ тытăнса тăма пултарнă пур хуторсене йĕритаврах икĕ рет йĕплĕ пралукпа карса тухнăччĕ. Инженерсем опорнăй пунктсене пур енчен те çирĕплетес тактика çукки çинчен каласа ĕнтерме тăрăшнă пулин те, Чапаев станицăсене йĕритаврах çирĕплетме хушнă, çапла майпа Францири революци вăхăтĕнче пулнă системăпа тепĕр хут усă курнă. Фортификацире вăл системăна «точечная система укрепления» теççĕ.

Чапаев хăй мĕншĕн ун пек тутарни пирки пит те хăйне майлă, кĕскен каласа панă:

— Шуйттан пĕлети ăна, тен вăл тылран сиксе тухать. Станицăна ункăпах карталăр. Шур казаксем вĕсем — лашасемпе, лаша пралук çине кĕрсе каймасть.

Сахарная станица—Гурьев çывăхнерехскер—Чапаев полкисен аллинче пулнă ĕнтĕ. Çак вăхăтра дивизире питĕ пысăк хуйхă пулса тăнă: Лбищенскра Чапаева вĕлернĕ.

Мана пĕр чапаевецăн, взвод командирĕ пулнăскерĕн калавĕ аса килет.

Тинĕс еннелле, Гурьев патнелле каякан Уральски тракт çинче вырнаçнă Сахарная станицăра 220-мĕш полкăн боецĕсем-чапаевецсем çичĕ кун хушши «ĕçсĕр» тăнă. Полк фронт линийĕсенчен пĕрине йышăнса тăнă. Нумай кайра — Лбищенскра—дивизи штабĕпе Чапаев пулнă.

Кунсем пĕр-пеккĕн иртнă, çавăнпа та калама çук вăрăм пек туйăннă. Темĕн пысăккĕш станицăн пушă урамĕсем, шурказаксем пăрахса тухса кайнă пушă çуртсем кичемлĕх кăна сарнă. Çапăçусемпе походсене хăнăхса çитнĕ боецсем темле хурлăх пуласса туйăнă.

Пĕрре каçалапа командирсене полк штабне пыма приказ панă.

— Çĕрле чакса каятпăр,—тенĕ полк командирĕ.

Командирăн сăнĕ хумхануллă пулни пурне те пăлхатса янă.

Каç пулнă. Тĕттĕм, çиллĕ каç.

— Кăвайтсем чĕртмелле, — команда саланнă цепь тăрăх...

Батальон йышăнса тăракан пĕтĕм участок кăвайтсемпе витĕнсен, çĕнĕ команда илтĕннĕ:

— Пемесĕр чакмалла.

Çĕрлехи тĕттĕмре кăвайт çуттисем çеç палăрса тăнă.

Ку отступлени мĕн пирки пулнине боецсем ирхине тин пĕлнĕ. Чапаев вилнĕ...

Хакла ларнă тăшмана геройăн вилĕмĕ!

1919 çулти сентябрĕн 10-мĕшĕнче, тул çутăлнă чух, Янайски хутор патĕнче, Уральскран 50 çухрăмра калама çук хăрушла çапăçу пуçланса кайнă. Шурказаксем чапаевецсене таттисĕрех пулеметсемпе артиллерирен вăйлăн персе тăнă. Шуррисен броневикĕсенчен пĕри пирĕн цепь ăшнелле кĕрсе кайнă. Броневикран инçетре мар, пĕр-ик çĕр казак чапаевецсем çине штыксемпе ыткăннă, рукопашнăй çапăçу пуçланса кайнă. Полк командирĕ артиллери дивизионне пур орудисенчен те тăшманăн броневикĕсене пеме хушнă. Самантрах пĕр броневикне лектерсе çĕмĕрнĕ, ун ăшĕнчен икĕ офицер чупса тухнă, красноармеецсем вĕсене штыксемпе чиксе çӳлелле çĕкленĕ.

— Халь лешсене хытăрах çапăр! — кăшкăрнă полк командирĕ, тăшкипе броневиксем çине кăтартса. Артиллеристсем тĕл пенĕ шуррисене чарса лартнă, унтан каялла тартнă.

Фурманов «Чапаевра» çапла çырнă: «Ун пек çапăçусене Чапаев дивизин ватă боевой командирĕсем те пуманах астумаççĕ... Янайски патĕнчи пек çапăçу урăх пулман... Халь вĕсем ĕнтĕ çĕнĕрен Гурьев çинелле, Каспи тинĕсĕн çыранĕсем патне çитиех наступленине кайнă...»

Чапаев вилĕмĕ пирки тарăхнă, тăшмана курайманнипе тулнă Чапаев полкисем ун çине пур вăйпа хаярăн тапăнса, Толстов генералăн шуркозакла çарне пĕтерсе хунă.

* * *

Чапаев пур енчен те çирĕп, ĕçсыннисем тăшманĕсене хирĕç иксĕлми курайманлăхпа тулнă çын пулнă, вăл, хăй пурнăçĕнче пĕртен-пĕр задача — социализм çĕнтерĕвĕшĕн кĕрешес задача лартнă. Халăха вăл пĕтĕм чĕререн юратнă. Тăшмансемшĕн вăл хаяр та хĕрхенӳсĕр пулнă, анчах хăйĕн пĕтĕмĕшпех çамрăксенчен пухăннă боецĕсене, командирĕсене, чапаевецсем шуррисенчен хăтарнă вырăнсенчи рабочисемпе хресченсене çавтери ăшă чĕрепе юратнă, вĕсене хисепленĕ.

Чапаев образĕ—социализмлă революци тапхăрĕнчи халăх геройĕн образĕ. Вăл пирĕн çĕршыври ĕçхалăхĕшĕн çеç мар çывăх пулса тăрать. Республикăллă Испанире фашизма хирĕç кĕрешнĕ чи лайăх отрядсем Чапаев ятне йышăннă. Чапаева Китайри партизансем те пĕлеççĕ, ăна юратаççĕ.

Чапаев образĕ пире хамăрăн Хĕрлĕ Çар ĕçхалăх интересĕсемшĕн, телейлĕ пурнăçшăн паттăррăн çапăçнисене аса илтерет. Чапаев çинчен хунă юрăсемпе легендăсенче совет халăхĕ кăмăла хаваслантарса çĕклентерет, паттăрлăха, хастарлăха, социализмлă тăван çĕршыва, Ленин—Сталин партине пĕтĕм чĕрепе юратса парăннине кăтартса парать.

Совет çĕршывĕ—Ленин—Сталин партийĕ ӳстерекен геройсен тăван çĕршывĕ. Фашизма çĕнтерессишĕн пулса пыракан паянхи çапăçусенче вăл Чапаев пек пиншер çĕнĕ геройсем парĕ те, тăшмана çĕнтерĕ.

Комбриг М. СЛЕПНЕВ.

Совет Союзĕн Геройĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Малалли, пуçламĕшĕ 1-мĕш страницăра)

машинисчĕсем Гуцота, Сташенко, Пореусова, Доротупова юлташсем кашни кунах нормăна 200 процент тултараççĕ. Донбасри Сталин ячĕпе тăракан шахтăри забойщиксем Синяковский, Трофименко тата Кугатов юлташсем кашни кунах 4—6-шар норма тăваççĕ.

* * *

Юлашки кунсенче Германи пропаганди çакăн пек пĕлтерӳсем пичетлесе кăларнă: Каунасра, Львовра тата совет тăрăхĕнче нимĕçсем оккупациленĕ ытти хулисенче çын виллисене тупнă пулать, вĕсене асаплантарса вĕлерни палăрнă пулать. Фашистсен çак «официальнăй пĕлтерĕвĕсем» пирки опровержени пама кирлех мар пулнă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен вырăнти халăхсене гитлерла методсене, гестапона нимĕç военщини андăн усă куракан методсене совет органĕсем хирĕç тăни пĕтĕм тĕнчене паллă пулса тăрать. Çакна калас пулать: çавăн евĕрлĕ суя хыпарсене пичетлесе кăларнипе фашистла пропаганда хăйĕн «официальнăй пĕлтерĕвĕсене» хатĕрлемелли майсене уçса кăтартать. Германи офицерĕ Вильгельм Г., хăйĕн чăçĕпе Хĕрлĕ Çар енне каçнăскер, çакна кăтартса панă: Совет Союзĕ çине тапăниччен кăпт маларах гестапо, пропаганда министерствипе пĕрле, «большевиксен тискер ĕçĕсене кăтартакан» анлă ассортимент хатĕрленĕ. Вилнĕ çынсене кăтартса паракан нимĕçсем тăвакан суя фотоӳкерчĕксене илсен, çакă паллă пулса тăрать: пур çĕрте те, ăçта гестапо пырса тухать, унта асаплантарса вĕлернĕ çынсен виллисем енчен çитменлĕх çук. Хăйсен «ĕçĕн» результачĕсене ӳкерсе илесси йывăр ĕçех пулса тăмасть.

Гитлерăн фашистла диктатури Германи халăхне тӳсме çук асап кăтартать. Пиншер çынсем концентрацилле лагерьсенче асапланаççĕ. ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: йĕплĕ пралукпа карта тытса çавăрнă концентрацилле лагерьте. («АИЦ» журналтан илнĕ репродукци).

Совет Информаци Бюровĕнчен

(Июлĕн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ)

Июлĕн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Полоцк, Лепель тата Новоград-Волынск енĕсенче çĕрĕпех вăрçă ĕçĕсем пысăккăн пулса пынă.

Остров енче пирĕн войскăсем йышăннă позицисенче çирĕпленсе тăнă тата çĕрле разведка ĕçĕсене вăйлăн туса пынă.

Июлĕн 8-мĕшĕнче кун вĕçленес тĕлне **Себеж** енче çапăçусем сарăлса кайнă, унта противникăн танк тата пехота чăçĕсем хĕвелтухăç еннелле татса тухма хăтланнă. Çапăçусем халĕ те пыраççĕ.

Полоцк енче, Борковичи тата Улла районĕсенче, вăйлă та хаяр çапăçусем пынă, çав çапăçусенче пирĕн войскăсем кĕске контрударсем туса противника пысăк çухатусем кӳнĕ.

Лепель енче пирĕн войскăсем противника пит вăйлăн çапнă, унăн моторизованнăй икĕ полкне çĕмĕрсе тăкнă, йывăр тата çăмăл батарейисене тăваттă тата танксене хирĕç кĕрешмелли орудисене чылай пĕтерсе тăкнă. Çапăçу пулнă вырăнта противникăн çĕршер çын вилсе юлнă, противник хĕвеланăç еннелле каялла чакнă.

Новоград-Волынск енче пирĕн войскăсем противникăн танксемпе моторизованнăй чăçĕсене хирĕç пĕр чарăнмасăр, вăйлăн çапăçнă, вĕсене хĕвелтухăç еннелле малалла кайма чарса тăнă.

Фронтăн ытти енĕсемпе участокĕсенче çав кун çĕрле вăрçă ĕçĕсем пысăккăнах пулса пыман.

Пирĕн авиаци Остров, Лепель тата Новоград-Волынск енĕсенче противникăн мотомехчăçĕсене тата унăн аэродромĕсенчи авиацине вăйлăн пырса çапнă.

Июлĕн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле противникăн аэродромĕсем çине çĕрле пыра-пыра тапăнса тата сывлăшри çапăçусенче пирĕн авиаци Лепель, Борисов тата Бобруйск енĕсенче кăна противникăнне 62 самолет персе антарнă, пирĕн 7 самолет пĕтнĕ.

Тĕплĕн шута илнĕ тăрăх, пирĕн авиаци июлĕн 8-мĕшĕнче противникăнне 102 самолет пĕтерсе тăкнă, пирĕн 10 самолет пĕтнĕ.

* * *

Вăрмантан тăшман танкĕсем тухни курăннă. Н-ски чăсĕн батарейине танксен атакине сирсе яма приказ панă. Танксене сывăха ярса, батарея вĕсем çине çавтери вăйлăн пеме пуçланă. Уйрăмăнах оруди наводчикĕ Ибрагимов палăрнă. Вăл хăй пĕччен 11 танк пĕтерсе тăкнă, çав шутра йывăр танксем 3 танк пулнă. Çав кун Н-ски батарея участокĕнче фашистсен 64 танкран 27-шĕ пĕтнĕ. Тăшманăн çĕмĕрсе сиен тунă танкĕсен экипажĕсенчен нумайĕшĕ хирĕç тăмасăрах парăннă.

* * *

Ф. местечко патĕнче кĕтмен çĕртен пырса тапăнса, кĕпере çавăрса илмелле тата противник çулне татмалла пулнă. Çав заданине пурнăçа кĕртме старший лейтенантсен Нестеров, Бережный тата Еременко подразделенийĕсене хушнă пулнă. Çĕрле боецсем кĕпер патне вăрттăн пырса, хăмăшсем хушшине пытаннă. Кунта вĕсем талăка яхăнах выртнă. Тепĕр кунне тĕттĕм пулса килнĕ чух кĕпере штурмлама тытăннă. Нимĕçсемпе румынсен салтакĕсем çакна нимĕн те сисмен пулнă, вĕсем хăйсен хĕçпăшалĕсене пăраха-пăраха, ним йĕркесĕр тарнă. Кĕпере сирпĕтсе аркатнă.

* * *

Чудски кӳлĕрен 120 километрта июлĕн 8-мĕшĕнче ирхине 4 сехетре нимĕçсен «Ю—88» йышши виçĕ бомбардировщикĕ, бомбăсен пĕтĕм грузне кӳлĕ çине пăрахса, совет аэродромне анса ларнă. Истребительнăй батальон боецĕсем тыткăна илнĕ летчиксем совет войскисен енне Совет Российине хирĕç вăрçашăн мар пулнипе вĕсене каçрăмăр, тесе ăнлантарса панă. Экипаж членĕсенчен пĕри стрелок-радист К. çапла каласа панă: Германи çарĕнчен тарса тухас шухăш бомбардировщиксен звенинчи экипажĕн вăрçă пуçланнăранпах хыççăн малтанхи куннех çуралнă. Анчах та июлĕн 8-мĕшĕнче кăна вĕсене каçма май килнĕ. Штурман Ш. Германи войскисенчи летчиксен составĕ хушшинче Совет Союзне хирĕç туса пыракан вăрçă çине тарăхса пăхнине кăтартса царакан чылай фактсем илсе кăтартнă. ССР Союзĕпе органĕсем хирĕç тăни пĕтĕм тĕнчене паллă пулса тăрать. Çакна калас пулать: çавăн евĕрлĕ суя хыпарсене пичетлесе кăларнипе фашистла пропаганда хăйĕн «официальнăй пĕлтерĕвĕсене» хатĕрлемелли майсене уçса кăтартать. Германи офицерĕ Вильгельм Г., хăйĕн чăçĕпе Хĕрлĕ Çар енне каçнăскер, çакна кăтартса панă: Совет Союзĕ çине тапăниччен кăпт маларах гестапо, пропаганда министерствипе пĕрле, «большевиксен тискер ĕçĕсене кăтартакан» анлă ассортимент хатĕрленĕ. Вилнĕ çынсене кăтартса паракан нимĕçсем тăвакан суя фотоӳкерчĕксене илсен, çакă паллă пулса тăрать: пур çĕрте те, ăçта гестапо пырса тухать, унта асаплантарса вĕлернĕ çынсен виллисем енчен çитменлĕх çук. Хăйсен «ĕçĕн» результачĕсене ӳкерсе илесси йывăр ĕçех пулса тăмасть.

Борисов енче Н-ски танковăй часть нимĕçсен икĕ батарейине çĕмĕрсе тăкнă тата артиллеристсен ушкăнне тыткăна илнĕ. Вĕсем хушшинчен тупнă документсенчен çакă паллă пулнă: батарейăсене хĕвеланăç фронтĕнчен илсе пынă. Германин тыткăна лекнĕ артиллери офицерĕ Людвиг В. çапла каласа панă: «Юлашки 8 уйăх хушшинче манăн артиллери чăçĕ Шербургра тăчĕ. Российăна хирĕç вăрçă пуçланиччен темиçе кун малтан пире эшелон çине лартса совет чиккине ăсатрĕç, çакă вăл кайранрахна кăна паллă пулчĕ». Тыткăна лекнисен допросĕнчен питех те интереслĕ деталь курăннă. Батарейăна эшелон çине тиенĕ вăхăтра батарейăсем вырăнне йывăçран тунă бутафорски орудисем вырнаçтарса лартнă. «Фронта, — каласа парать Людвиг В., — эпир тунтикун, июнĕн 23-мĕшĕнче пырса çитрĕмĕр, ун чухне вăрçă ĕçĕсем пуçланнă ĕнтĕ. Кунтя эпĕ хамăн ĕлĕкхи юлташсене артиллеристсене темиçе çынна тĕл пултăм, вĕсем кунччен темиçе кун малтан Дюнкеркра пулнă, — капитан Генрих Ц. тата лейтенант Отто Ф. Вырăссемпе мана нумай çапăçма тивмерĕ».

* * *

Советăн никам тытайми партизанла групписене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте фашистла захватчиксем вăйсăр. Германи часовойĕсене телеграф юписем патне çывăха пыракан кашни çыннах персе вĕлерме приказ панă. Çак кунсенче П. ятлă ял патĕнче фашистсем хĕçпăшалланнă партизансен группине хыçалтан йĕрлесе пынă, çав партизансем проводасене татма хăтланнă. Партизансем салтаксене хуралласа тăракан объектран инçетри вăрманалла илĕртсе пынă та, хăйсем тарса пытаннă. Каялла тавăрăнсан нимĕçсем çакна курнă: линие пурпĕрех çĕмĕрсе тăкнă пулнă. Проводасене партизансен 2-мĕш группи аркатса тăкнă.

* * *

Совет Союзĕнчи рабочисем, колхозниксем тата интеллигенци хаяр та ирсĕр тăшмана пĕтерсе тăкмалли çĕнтерĕве геройла ĕçре туптаççĕ. Новошахтински районри конвейерсен переносчикĕ Медведев, врубмашинист Воронин тата бурильщик Рягузов нормăсене кашни кунах 200—300 процент тата ытларах та тултараççĕ. Крым АССР Республикинчи Орджоникидзе ячĕпе тăракан заводри токарь Ефимов питех те кирлĕ заказ илнĕ, çав заказа пысăк мастерлăхпа тата питех те тĕрĕс тумалла пулнă. Каç пулнă тĕле вăл заданине 200 процент тултарнă. Атăлпа Каспири Госрыбтрестăн ремонтно-механически мастерскойĕсенчи ватă токарь Яблонский, Хĕрлĕ Çарти виçĕ боецăн аттăшĕ, 9 сехет хушшинче икĕ цилиндр тата пĕр поршень туса кăларнă, норма тăрăх вĕсене 27 сехет хушшинче тумалла пулнă. Запорожье облаçĕнчи Киров ячĕпе тăракан заводри мастер Яценко пĕр кунхи заданине 1000 процент тултарать. Мускав облаçĕнчи Сталин ячĕпе тăракан заводри ертсе пыракан цехсенчи рабочисем пурте ĕç нормисене 130 процентран пуçласа 300 процента çити тултараççĕ.

Советлă Украинăри ĕççыннисем тăшман ĕçĕсене ĕлчĕн тата пит тимлĕн сăнаса тăраççĕ, шпионсемпе диверсантсене тытас ĕçре Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. «Шуми поле» колхоз çывăхĕнче самолет çинчен фашистсен 5 салтакĕпе офицерĕ аннă. Самолета сăнаса тăнă колхозниксем диверсантсене хупăрласа илнĕ, вĕсене тытса штаба илсе пынă. Н. хулинче телефонистка Борисовăна почтăри телефон будкинчен пĕр паллă мар çын звонить тунă. Вăл хăйне çыхăнун хăшпĕр предприятийĕсем ăçта вырнаçса тăни çинчен справка пама ыйтнă. Борисова ăна интереслентерекен адрессене пухиччен тăхтама хушнă. Çав вăхăтра хăй ун çинчен милицине пĕлтернĕ. Тепĕр темиçе минутăран «клиента» телефон будкинчех арестленĕ, вăл малтанхи кун парашютпа аннă фашистла диверсант пулнă.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Исландие йышăнса илнĕ

Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Рузвельт Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Исландие (Атлантика океанĕн çурçĕр пайĕнчи утрава) йышăнни çинчен пĕлтернĕ. (ТАСС).

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Исландие оккупацилени, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче ку тапхăрта тунă кирек-мĕнле мероприятисенчен те ытларах, Америкăна тинĕс-çар министрĕ Нокс Америка флотне тинĕссене Германи подводнăй лодкисемпе рейдерĕсенчен тасатма чĕнни патне çывхартать тесе шутлаççĕ. Сенатор Поппер Америка войскисене Исландие яни çинчен пĕлсен, çапла каланă: «Эпир Азорски утравсене, Зеленый Мыс утравĕсене тата Мадейруна оккупацилеме хатĕр. Гитлер çак утравсене туртса илме шутлать, эпир пĕлетпĕр, вăл вĕсене агрессиллĕ тĕллевпе кăна туртса илесси президента паллă пулсан, эпир вĕсене туртса илетпĕр». Политикăллă обозревательсем çапла шутлаççĕ: Исландие каймалли тинĕс çулне нимĕçсем блокада тума хăтлансан, Германипе Америка тинĕс-çар флочĕсем тытăçасси пурпĕрех пулать.

Румынири массăллă репрессисем

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Бухарестран пĕлтернĕ тăрăх, Румыни влаçĕсем Прут юханшывĕ тăрăхĕнчи ялсенчен 15 çултан пуçласа 55 çулхи таран çынсене урăх вырăна куçарнă. Çак çынсене: вĕсем «совет шпионĕсем» пулса тăраççĕ, тесе куçарнă. Корреспондент çапла пĕлтерет: таможнясенчи нумай салтаксемпе служащисем Хĕрлĕ Çара пулăшнине палăртнă. Вĕсене тытса вĕлернĕ. Çав корреспондент пĕлтернĕ тăрăхах, Констанцăри çар трибуналĕ Арбу ятлă рабочине вĕлермелле тунă, вăл рабочи совет авиацийĕ тапăннă чухне хулара çутă çутма хăтланнă. Ăна Констанца хулинчи электростанцири тăватă рабочи пулăшнă. Çав рабочисенчен иккĕшне çирĕмшер çуллăха, ыттисене — кашнинех вунпилĕкшер çуллăха тĕрмене хупмалла тунă.

Бухарестри полици тăвакан арестсем, ухтарусем тата ытти репрессисем массăллăн пулса пыраççĕ. Румыни правительстви, халăха лăплантарас тесе, июлĕн 7-мĕшĕнче официальнăй пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă, вăл пĕлтерӳре çапла каланă: Румынири полици ĕçĕсене пула е влассен ытти юрăхсăр ĕçĕсене пула сиен курнă çынсен пурин те шалти ĕçсен министерствине пырса хăйсен претензийĕсем çинчен каласа памалла. Полици туса ирттерекен массăллă репрессисене çакăн пек ăнлантарса памалла: полици вĕсене «тĕпрен илсен тарăхса вĕчĕркеннипе» туса пырать пулать. Нумаях пулмасть çĕрле Бухарест çине пырса тапăннă чухне çынсене нумай арестленĕ, противника световой сигналсем панă тесе вĕсен хваттерĕсене ухтарнă.

Франци правительстви Испани беженецĕсене Германи фашисчĕсене панă

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Америка пичетĕ çапла пĕлтернĕ: Франци правительстви Франци территоринче пурăнакан Испани республиканецĕсене-беженецсене Германи власĕсен аллине панă. Франци правительстви çак пĕлтерӳ тĕрĕс мар тесе кăтартма хăтланнă. Анчах та, «Нью-Йорк таймс» хаçат корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Франци правительствин ирĕксĕрех çакна йышăнма тивнĕ: беженецсен пĕр пайне чăнах та Германие янă, тепĕр пайне тĕрмене хупнă. Испани республиканецĕсене 20 пин çынна яхăн Африкăна янă, вĕсемпе унта чугунçул строительствинче усă кураççĕ.

Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмах пирки ютçĕршывсенче мĕн çыраççĕ

СТАМБУЛ, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). Сталин юлташ радио тăрăх тухса каланă сăмахĕ çинчен Турци хаçачĕ «Тан» çапла çырать: çак сăмах пысăк событи пулса тăрать. Сталин сăмахĕ халăхи пурнăçпа ĕçсене питĕ лайăх çутатса парать Сталин Германи çарĕ хăшпĕр çитĕнӳсем тунине пытармасть, анчах та ăна Наполеон çарне çапса çĕмĕрнĕ пекех çапса çĕмĕреççĕ. Хăйĕн базисенчен куçса пынă май, Германи çарне бензин, продовольстви тупма йывăртарах та йывăртарах пулать, çуллесемпе усă курма йывăр пулать. Вăл вăйсăрланать, малтанхи ăнăçусем поражени пулса тăраççĕ. Вăрçа вăрăма тăсăлсан, Германия хăйĕн çулĕ çинче пушхирсем çеç тĕл пулать. Çавăнпа та, хăрушлăха кăтартса, Сталин — совет халăхĕн вăйне шанать, унăн пессимизм çук. Вăл халăха танксем, тупăсем тата самолетсем нумайрах туса кăларма чĕнет.

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Санкт-Ягоран пĕлтернĕ тăрăх, Сталин юлташ радио тăрăх тухса калани Чили халăхне питĕ кăмăла кайнă тата питĕ интереслентернĕ. Халĕ нумай организацисем Совет Союзне материаллă тата мораллĕ пулăшу пама хатĕрленеççĕ. «Эль сигло» хаçат «Тĕнчен фашизма хирĕçле кĕрешĕвĕ» ятлă статьинче Совет Союзне пулăшассишĕн кампание пĕрлешме чĕнет. Хаçат çапла çырать: Совет Союзĕпе пĕр шухăшлă пулассишĕн пыракан движени хуласенче, ялсенче, фермăсенче тата фабрикăсенче хăвăрт сарăлса пыратъ.

СТАМБУЛ, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). Ютçĕршыв корреспонденчĕсенчен пĕри, июлĕн 4-мĕшĕнче Загреб хулинчен тухса килнĕ Америка гражданинĕпе хăй калаçни çинчен пĕлтерет. Корреспондентпа калаçнă чухне американец çапла каланă: усташасем (хорват фашисчĕсем) питĕ çирĕп мерăсем йышăннă пулин те, Сталин сăмахĕ, июлĕн 3-мĕшĕнче каçхине пиншер çынна паллă пулнă. Сталин: Хĕрлĕ Çар фашистсенчен хăйĕн çĕршывне кăна мар хӳтлет, çавăн пекех фашизм пусмăрлакан Европăри мĕнпур халăхсене тӳтлет, тесе каланă мĕнпур Хорватири ялсемпе хуласене уйрăмах хăвăрт сарăлса кайнă.

Хорватсем оккупантсене тата вĕсен тарçисене — усташасене кураймаççĕ. Эпĕ Америкăран килнине пĕлсен, тенĕ малалла американец, хорватсем хăйсен шухăшĕсене нимĕн пытармасăр каласа пачĕç. Эпĕ калаçнă çынсенчен нумайĕшĕ, Сталин çирĕплĕхĕнчен тĕлĕнеççĕ. Сталин тĕрĕс калать, теççĕ манпа калаçакансем. Гитлера хирĕç мĕнпур средствăпа кĕрешес пулать. Босни тата Далмаци сăрчĕсем çинче пирĕн партизансем нумай, вĕсем тата нумайрах пулаççĕ. Эпир, хорватсем, Совет халăхĕпе пĕрле, фашистсене çĕмĕрсе тăкатпăр.

Кăнтăрти фронта яма усташасен корпусне пухса хатĕрлесси мĕнле пыни çинчен корреспондент ыйтни çине американец çапла ответленĕ: «Хĕрлĕ Çара хирĕç кĕрешме кайма экспедиционнăй корпуса çырăнма Павелич чĕнипе никам та килĕшмен хыççăн, усташасен организацийĕсем ирĕксĕрлесе çырма тытăнчĕç. Эсир хăвăр пĕлетĕр, — тесе каланă американец, — ирĕксĕрлесе янă хорватсем мĕнле вăрçма пултарччăр-ха».

СТОКГОЛЬМ, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). Сталин юлташ выступленийĕ Дани халăхĕн мĕнпур сийĕсене пысăккăн интереслентернĕ.

Копенгагенран Мальнена (Кăнтăрти Швеци) пыракан датчансем çапла каласа параççĕ: Сталин выступленийĕ ячĕпе Лондонран дани чĕлхипе панă радиопередачăна Данири вунщăр пин çын итленĕ. Халăхăн анлă массисем хăйсем совет халăхĕпе пĕр шухăшлă пулнине палăртаççĕ.

Копенгагенра «Хĕрлĕ Çар çĕнтерет» ятлă листовкăна нумай сарнă, унта Сталинăн радио тăрăх тухса каланă сăмахĕ çинчен кĕскен каласа панă. Копенгагенра икĕ нимĕç салтакне арестленĕ, вĕсем çумĕнче çав асăннă листовкăсене тупнă.

Англи пичетчĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă çинчен

ЛОНДОН, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). «Санди таймс» хаçатăн дипломатиллĕ обозревателĕ çапла çырать: вырăссем халлĕхе хăйсен чи лайăх войскисене çапăçăва кĕртмен текен тĕрĕс кăтартусем пур. Совет авиацийĕ ăнăçлăн çапăçать. Вырăссем хăйсен çĕнĕ истребителĕсемпе уйрăмах кăмăллă, вĕсен шухăшĕпе, çав истребительсем нимĕçсен «Мессершмичĕсенчен» пертте юлмаççĕ, кунсăр пуçне вырăссен нумай йышлă танксем пур. Совет чугунçулĕсем пысăк пахалăхпа ĕçлеççĕ, вĕсем пĕр чарăнмасăр фронта çар хатĕрĕсем турттарса пыраççĕ. Совет çарĕ материалсем пысăк пахалăхлă пулнине шанса тăрать.

«Обсервер» хаçатăн редакторĕ Гарвин çырнă умстатьяра совет çарĕсем çĕршыва паттăрлăн хӳтлесе тăнине мухтаса палăртнă. Гарвин çапла çырать: Хĕвелтухăç Европăри кĕрешӳ хăйĕн калăпăшĕпе тата хаярлăхĕпе пĕр танах. Нимĕçсем хăйсем умне лартнă тĕллев шатне нимĕн чухлĕ те пыраймарĕç. Вырăс çарĕсем тата халăх хăлхи вăрçăн меточĕсене вăренсе алла илнипе тĕлĕнмелле вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Вырăссем хирĕç тăнине противник енче те йышăнаççĕ тата пĕлĕнеççĕ. Вырăссем механизированнăй вăрçăн хăлхи условийĕсене нимĕçсенчен кая мар ăнланаççĕ. Совет авиацийĕ тата танксем тăшмана вилмеллипех çĕмĕреççĕ, апла пулсан та хут çинче Германин верховнăй командованийĕ вĕсене пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă, тесе çирĕплетет, çакă вара пĕтĕм тĕнчешĕн хуláшла пулса тухать.

Çар ĕçĕсем пирки Гарвин малалла çапла çырать: «Юлашки икĕ эрне хушшинче национал-социалистсем вырăссен хăюллăхĕпе тимлĕхне ирĕксĕрех чылай пĕлмелле пулчĕ. Малашне вĕсен вырăс халăхăн хастарлăхне тата ресурсĕсене тепĕр хут курмалла пулать. Тĕнче историнче халăхи вăхăтра пулса иртекен çапăçусем пек вăйлă çапăçусем халиччен пулман пулсан та, эпир шанса тăратпăр, пулас эрнесенче е уйăхсенче çапăçусем ку вăхăтчен пулнисенчен тата вăйлăрах пулĕç».

«Санди Пикториэл» хаçат çапла çырать: Халĕ кăна вырăс оборонин тĕп вăйĕсем çапăçăва кĕреççĕ. Вырăссен укрепленисен главнăй системине никам та тĕкĕнмен. Нимĕçсем халех малтанхи вăрçă пулнинчен нумай сухатрĕç. Тытса илнĕ территорисенчи гражданла халăх нацистсене итлемест кăна мар, вĕсене хирĕç хаярлăн кĕрешет. Нимĕçсем вырăссен çар промышленноçĕн ĕçне мĕнле те пулсан чарса лартас тесе шутлани пачах пурнăçланмарĕ. Российăра пĕтнисем вырăнне Гитлер çарсене урăх территорисенчен куçарать. Геббельс Германи халăхне кăмăла кайман тата юрăхсăр хыпарсене итлеме хатĕрлет. ССР халĕ вăрçă пуçламĕшĕнчи вăхăтран лайăхрах организацилленнĕ.

„Тюркише пост“ хаçат ирĕксĕр йышăнни

СТАМБУЛ, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Стамбулра Германи посольствин «Тюркише пост» ятлă хаçат тухса тăрать. Фашистла пропаганда органĕн ялан суйнине, мухтаннине пăхмасăр ирĕксĕрех çакна йышăнма тивнĕ: халĕ пыракан çапăçусенче совет войскисем питĕ хытă хирĕç тăраççĕ. Германин çар корреспонденчĕсем, тесе çырать хаçат, «Совет салтакĕн тĕлĕнмелле паттăрлăхĕ çинчен» фактсем илсе кăтартаççĕ. Пĕр çар корреспонденчĕ хак панă тăрăх, совет войскисем хăйсен геройлăхĕпе, нимĕн хăраманнипе тата вилĕмрен нимĕн шикленменнипе Германин хĕвеланăçĕнчи противникĕсенчен иртсе кайнă.

М.М. Литвинов юлташ радио тăрăх тухса калани

Июлĕн 8-мĕшĕнче каçхине 11 сехетре М. М. Литвинов юлташ радио тăрăх акăлчан чĕлхипе тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче Литвинов юлташ Совет Союзĕ çине Гитлер ултавлăн тапăнни çинчен чарăнса тăнă. Вăл хăйĕн сăмахĕнче тĕнчере пуçпулса тăрас шутпа ытти çĕршывсем çине пĕчченшĕрех тискер майпа тапăннă Гитлерăн киревсĕр планĕсене характеристика панă. Литвинов юлташ çапла паллă тунă: Хĕвелтухăçĕнче Гитлер «çиçĕм пек хăвăрт» çитĕнӳ тума шухăшланине тĕлĕнмелле хăюллăхпа паттăрлăх кăтартакан Хĕрлĕ Çар аркатса тăкнă.

Гитлера хирĕç тăракансен задачи çакăнта пулать: ăна пĕр минутăлăха та сывлăш çавăрса илме памалла мар, ăна, пурте пĕрле пулса, тăтăмах, ывăнма пĕлмесĕр, мĕнпур вăйран çĕмĕрсе тăкмалла, тенĕ малалла Литвинов юлташ.

Юлашкинчен Литвинов юлташ çакна паллă тунă: ССР Союзĕнчи халăхсем, хăйсен юратнă çулпуçĕ Сталин юлташ чĕнсе каланине ответлесе, гитлеризма хирĕç пыракан отечественнăй вăрçа пурте пĕр çын пек пулса çĕкленчĕç тата ирĕклĕн пурăнма юратакан ытти мĕнпур халăхсемпе пĕрле çак вăрçа фашистла мракобесипе варварствăна тĕпĕ-йĕрĕпе пĕтерсе тăкичченех туса пырĕç. (ТАСС).

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Германи тата Франци çурçĕр-хĕвеланăç пайĕ çине пырса тапăннă. Германире Мюнстерти тĕрлĕрен объектсем çине каллех бомбăсем вăйлăн пырса пăрахнă, унта пысăк пушарсем тухнине палăртнă. Рур тата Рейн облаçĕсенчи тĕрлĕрен районсем, çав шутра Дортмунд çине те, фугаслă тата вут тивертсе яракан бомбăсем нумай пăрахнă. Дюссельдорфпа Кельна, çавăн пекех Эмден порчĕпе Роттердамри доксене атакăланă. Франци çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнче бомбăсем пăрахмалли тĕп объект Брестри тинĕс-çар бази пулнă. Германин çар карапĕсем тăракан доксем çине бомбăсем пит хаярран пăрахнă. Çав операцисенчен Англин ултă самолечĕ тавăрăнман.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Енер кăнтăрла Англин йывăр бомбардировщикĕсем, истребительсем хӳтлесе пынипе, Альберт çывăхĕнчи Меольт патĕнчи авиаци завочĕ çине, электростанци тата Бетюн çывăхĕнчи химия завочĕ çине пырса тапăннă. Вĕсем çине фугаслă тата вут чĕртсе яракан пит хăватлă бомбăсем пăрахнă. Противникăн çивĕ истребительне персе антарнă.

Кунсăр пуçне, Голланди çыранĕ çывăхĕнче противникăн вăйлă конвойпа пыракан суднăсен караванĕ çине те бомбăсем пăрахнă. Караван составĕнче икĕ пин тоннăран пуçласа сакăр пин тоннăллă 8 судно пулнă. Калĕ патĕнче суднăсен тепĕр караванне бомбардировщиксен тепĕр соединенийĕ атакăланă. Противникăн виçĕ пин тоннажлă пĕр суднине ăна хуралласа пыракан торпеднăй катерне путарнă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Хĕвеланăç Германири хăшпĕр хуласем çине вăйлăн пырса тапăннă.

* * *

ЛОНДОН, июлĕн 8-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, июлĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Германи самолечĕсем Англин кăнтăр çыранĕнчи пĕр хула çине вăйлăн пырса тапăннă. Халăх хушшинче темиçе çын вилнĕ.

Июлĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи çинче сывлăшра пулнă çапăçусенче противникăн пилĕк самолетне персе антарнă.

ССР Союзне хирĕç кĕрешме Испанире „доброволецсем“ пухма хăтланнинчен нимĕн те тухман

НЬЮ-ЙОРК, июлĕн 7-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Гибралтартан пĕлтернĕ тăрăх, Испанири фалангистсем концлагерьсенче ларакан республиканецсене выçăпа хăратса вĕсене ССР Союзне хирĕç вăрçа хутшăнма доброволецсем пухма хăтланнă. Çак ĕç пĕтĕмпех саланса кайнă. Алхесирас тата Ла Линеа районĕнче июнĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 30-мĕшне çитиччен доброволецсене темиçе çын çеç пухнă.

Отпускра пулманнишĕн компенсаци тӳлемелли йĕрке çинчен

Ыйтса çырнисем килнĕ май, ВЦСПС çапла ăнлантарса панă: СССР Верховный Советĕн Президиумĕ 1941 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче «Рабочисемпе служащисен вăрçă вăхăтĕнчи ĕç режимĕ çинчен» кăларнă Указ тăрăх, отпускра пулманнишĕн компенсаци тӳлессине отпуска кайман работникĕн ĕç çулталăкĕн юлашки уйăхĕн вĕçĕнче туса ирттереççĕ. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çу лĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 2516

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ Ь 345. ф. б 38 84 п. л.